24-мĕш çул тухать. Хакĕ 10 пус.

1941
ЯНВАРЬ
8
ЮНКУН
6 (5721) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

ЧĂВАШ КОММУНИ

Вăрман хатĕрлес ĕçĕн чи хĕрӳллĕ тапхăрĕ

Хĕллехи сезон вăрман хатĕрлес ĕçре пит те ответлă тапхăр пулса тăрать. Январь — март уйăхĕсенчи ĕçсен калăпăшĕ ытти кварталсенчи планран нумай пысăк. Пĕрремĕш кварталти плана ытлашшипех тултарсан тата ытти кварталсенче те çав хăвăртлăхпах ĕçлесе пырсан кăна вăрман промышленноçĕ çулталăкри плана срокчен тата пĕтĕмпех тултарасса, хуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлессе шанса тăма пулать.

Пирĕн республикăри вăрман промышленноçĕ иртнĕ çулта питĕ начар ĕçлерĕ. Вăрман касса хатĕрлес тĕлĕшпе çулталăкри плана 74,2 процент, вăрман турттармалли плана 81,8 процент çеç тултарнă. Ку ĕнтĕ çĕнĕ çулăн пуçламĕшĕнче пĕтĕм ĕçе тĕрĕс организацилеме пĕлмен пирки пулнă. Пĕлтĕр вăрман хатĕрлекен организацисенчен чылайăшĕ кулленех ӳссе пыракан хăвăртлăхпа ĕçлеймерĕç. Вăрман работникĕсен çакăн пек йăла пур: квартал е уйăх пуçламĕшĕнче вĕсем лăпкăн ĕçлеççĕ, кайран, квартал вĕсленес умĕн, туллин усă курмасăр иртернĕ вăхăта тавăрас шутпа, «штурмсем» тума тытăнаççĕ. Ун пек чухне вара вĕсем хыпăнса ӳкеççĕ. Паллах, çакăн пек йăлана пĕтерес пулать.

Иртнĕ çулти уроксенчен большевикла выводсем тумалла. Пĕлтĕрхи йăнăшсем кăçал ан пулччăр тесен, вăрман работникĕсен пĕрремĕш кварталти плана ытлашшипех тултарассишĕн халех мĕнпур вăй-хала хурса ĕçлемелле. Кашни леспромхоз тата мехлеспункт, кашни мастер участокĕ тата бригада хăйсен планĕсене, кашни рабочи хăйĕн нормине кулленех тултарса пыччăр.

Пирĕн вăрман промышленноçĕ хальхинчен темиçе хут лайăхрах ĕçлеме цултарать. Ăна иртнĕ çулти тăваттăмĕш кварталти ĕçсем лайăх кăтартса параççĕ. Пĕтĕмĕшпе илсен, Чăваш АССР вăрман промышленноçĕн Халăх Комиссариачĕ тăваттăмĕш кварталта вăрман касса хатĕрлес плана 102,5 процент, вăрман турттарас плана 124 процент тултарнă.

Улатăр леспромхозĕн çитĕнĕвĕсем татах та пысăкрах. Вăл хăйĕн планне вăрман касса хатĕрлес тĕлĕшпе 125,5 процент, вăрман турттарас тĕлĕшпе 210 процент тултарнă. Шăмăршă леспромхозĕ те начар мар ĕçлерĕ, хăйĕн планне ытлашшипех тултарчĕ. Çак çитĕнӳсем хăйсем тĕллĕн пулса пыман, вĕсене çине тăрса ĕçленипе çĕнсе илнĕ.

Улатăр тата Шăмăршă леспромхозĕнчи коммунистсем, беспартийнăй большевиксем социализмлă ăмăртупа стахановла движенине пуçарса тата конкретлăн ертсе пынă. Вĕсем СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ июнĕн 26-мĕшĕнче кăларнă Указа çирĕплĕн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Ĕç дисциплинине çирĕплетнĕ, партиллĕ-политикăллă ĕçе лайăхлатнă. Кунта мĕнпур резервсемпе усă кураççĕ.

Хăшпĕрисем вăрманта ĕçлеме çынсем çук, теççĕ. Çав вăхăтрах хăйсемех ĕç вăйĕпе тĕрĕс мар усă куринине туйса илмеççĕ. Сăмахран, Улатăр леспромхозĕнче квалификаци туяннă рабочисем вак-тĕвек ĕçсенче пулнă. Халĕ вĕсене, пĕтĕмпе 70 çынна, мастерсен участокĕсене, пысăкрах тата ответлăрах ĕçсене куçарнă.

Çиелтен пăхсан, çак фактăн пĕлтерĕшĕ пысăк мар пек. Анчах халĕ, вăрман хатĕрлес ĕçĕн чи ответлă тапхăрĕнче, кадрта тăракан кашни рабочи хаклă. 70 рабочине мастер участокĕсене, бригадăсене ĕçлеме куçарни леспромхоза пысăк усă памалла. Ун пек рабочисем ытти çĕрте те, уйрăмăнах Вăрнарпа Çĕмĕрле леспромхозĕсенче, нумай. Пысăк квалификациллĕ мĕнпур рабочисем бригадăсенче, мастер участокĕсенче пулмалла. Вĕсен хăйсен пысăк опычĕсем тăрăх çамрăк рабочисене тухăçлăн ĕçлеме вĕрентмелле.

Вăрман промышленноçĕн ĕçне лайăхлатса пыма мĕн кирлĕ, çавсене пирĕн правительство пĕтĕмпех çителĕклĕн парать. Ленин—Сталин партийĕ тата совет правительстви пулăшнипе вăрман промышленноçĕ кунсеренех çĕнĕрен те çĕнĕ техникăпа хĕпăшалланать. Хальхи вăхăтра пирĕн республика вăрманĕсенче те темиçе вунтăр автомашинăсем, тракторсем тата тĕрлĕ сложнăй механизмсем ĕçлеççĕ.

Вăрманта производство новаторĕсем, стахановецсемпе ударниксем нумай, вĕсен йышĕ ӳссех пырать. Инженерно-технически работниксем, кадрта тăракан пысăк квалификациллĕ рабочисем те сахал мар. Вĕсем хăйсен ĕçне пĕтĕм чĕререн юратса тăваççĕ, халиччех кая юлса пынă вăрман промышленноçне малти рете кăларассишĕн çине тăрса ĕçлеççĕ. Улатăр леспромхозĕнчи вăрман касакан К. Мокеев çуллахи сезонра 104,5 ĕçкунĕ хушшинче 236 норма, урăхла каласан, плана 226 процент тултарса 4005 тенкĕ те 76 пус ĕçлесе илнĕ. Вăрман турттаракан А. Ахмеров юлашки 50 ĕçкунĕ хушшинче 108,6 норма çити, урăхла каласан, плана 217 процента çити тултарнă. Вăрман касакан лучкист Н. Сальков (Киряри мехлеспункт) 61 ĕçкунĕнче 110 норма тунă—плана 175 процент тултарнă.

Кун пек примерсем нумай, вĕсене кашни леспромхоз тăрăх вунпăрăн кăтартса пама пулать. Анчах производство новаторĕсен тата стахановецсен паха опычĕсене анлăн сарса пырас ĕç тивĕçлĕ вырăнта тăмасть. Çав опытсем тăрăх вăрманти мĕнпур рабочисене стахановла тухăçлăн ĕçлеме вĕрентсе пыни сисĕнмест-ха. Паха опытсене çийĕнчех курса ăна хăвăртрах ытти çĕре куçарасси вăрман работникĕсен кулленхи йăлине кĕрсе ситмен.

Вăрман промышленноçĕ кая юлса пынине пĕтерме кирлĕ условисем пирĕн çителĕклĕ. «Эпир хуçасăрлăхпа чăн-чăнах кĕрешсе пырсан, техникăпа усă курассине большевикла çĕклентерсен, стахановла движенине малалла та аталантарса пырсан, ĕç тухăçлăхне ӳстересшĕн кĕрешессине тата наукăллă техникăллă çитĕнӳсене сăмахпа мар, ĕçре халăх хуçалăхĕн мĕнпур отрасличченче сарассишĕн кĕрешессине вăй патсан,—вара эпир халиччен курман тĕрекленнĕ социализмлă обществăн никĕсĕ çинче çеç пулма пултаракан халăх хуçалăхĕн çĕкленĕвне... тума пултаратпăр» (Молотов).

Çак задачăна большевикла пурнăçа кĕртсе пыма пĕлменни пĕтĕм ĕçе чăрмантарса тăрать те ĕнтĕ. Лайăх, çĕнĕлле механизацileнĕ çулсем, хăватлă машинăсен паркĕ пур халĕ пирĕн вăрмансенче. Анчах вăрман работникĕсем вĕсемпе çителĕклĕн усă курмаççĕ. Кашни машина хăйĕн пĕтĕм вăй-хăвачĕпе ĕçлетĕр—акă мĕншĕн кĕрешмелле инженерно-технически работниксен.

Мастер участокĕ—тĕп вырăнта тăмалла. Вăрман касакан тата турттаракан рабочисене, бригадăсене пĕрлештермелле. Ку паянхи ĕç, ăна вăраха хăвармалла мар. Кашни мастер участокĕнчех тĕрĕс организацileнĕ бригадăсем пулмалла, кунтах пысăк квалификациллĕ тата сахалтарах опытлă рабочисене пĕлсе выльăхтарса тухмалла, бригадирсем пулма чи лайăх çынсене суйласа илмелле.

Чылай колхозсем договорсем тăрăх илнĕ обязательствăсене тултармаççĕ. Уйрăмăнах Кувакино районĕнчи хăшпĕр колхозсем начар ĕçлеççĕ. Партин хăшпĕр райкомĕсем, райсовет исполкомĕсем вăрман касса хатĕрлес тата турттарас ĕçе большевикла ертсе пымаççĕ, вăрманти рабочисем хушшинче партиллĕ-массăллă ĕçе лайăхлатассине çинче çителĕклĕн çаврăнса пăхмаççĕ. Пĕрремĕш квартал çулталăкри пĕтĕм ĕçĕн ăнăçлăхне татса паракан квартал. Çавăнпа та колхозсен хăйсен обязательствине пĕтĕмпех пĕрремĕш кварталта тултармалла. Çак ĕçе ВКП(б) райкомĕсем, райсовет исполкомĕсен конкретлăн ертсе пымалла.

Малта пыракан леспромхозсем партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç. Партконференци уçăлнă куна пĕрремĕш кварталти плана 70 процентран кая мар тултармалла,—çак лозунга кăларса тăратрĕ Улатăр леспромхозĕн коллективĕ вăрман работникĕсем умне. Производство командирĕсен задачи—çак пуçарăва конкретлăн ертсе пырасси пулать. Кулленхи плана тултарман пĕр рабочи те ан пултăр! Стахановецсен кашни пуçарăвнех организациллĕ, техникăллă ĕçсемпе çирĕплетсе пымалла. Мĕнпур машинăсемпе тата механизмсемпе çителĕклĕн усă курни, ĕç дисциплинине çирĕплетни, технологиллĕ процеса пăхăнса, ăна лайăхлатса пыни кирлĕ.

Учительсен районри канашлăвĕ

КУСЛАВККА, январĕн 6-мĕш. (Телефонпа хамăр корр.). Паян кунта учительсен районри канашлăвĕ уçăлчĕ. Канашлу шкулсем вĕрентӳпе воспитани ĕçĕнчи питех те пысăк ыйтусене сӳтсе-явать. Чи малтанах учительсен канашлăвĕ партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнасси çинчен ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Крусин юлташ докладне итлерĕ. Доклад тăрăх йышăннă резолюцире учительсем шкулсенче XVIII партконференци ячĕпе социализмлă ăмăртăва сарса яма, вĕрентӳпе воспитани ĕçĕнче татах та ытларах çитĕнӳсем тума, хутла пĕлменнисене сахал пĕлекенсене вĕрентес ĕçе татах та активлăрах туса пыма пулчĕç.

Кун хыççăн канашлу шкулта вĕренекен ачасем хушшинче ăнланулла дисциплинăна çирĕплетесси çинчен райсӳтĕç пайĕн заведующийĕ Рожнов юлташ доклачĕне содокладсене итлесе сӳтсе-явма тытăнчĕ.

Канашлу виçĕ кун хушши пырать. Пренисенче учительсем активлăн тухса калаççĕ.

Ф. АЛЕКСАНДРОВ.

Ученăйсем колхозниксемпе пĕрле çыхăнса ĕçлени

Академик Лысенко пуçарнипе иртнĕ çулта Мускав облаçĕнчи уйхирсенче çу вăхăтĕнче 4 пин гектар ытла çĕрулми лартнă. Кунчен малтан çĕрулмине çу вăхăтĕнче лартни пулман. Лысенко ĕнче час-часах пулнă, çĕрулмĕле пăхса çитĕнтересси çинма тультиваци тăвасси тата ыт. те ĕçсене куçартусем панă. Колхозсем 60 пин тонна ытла пысăк пахалăхлă çĕрулми пуçтарса илнĕ. Ялхуçалăхĕн Ленин ячĕпе тăракан Пĕтĕм Союзри академийĕн тата çĕрулми хуçалăхĕн Пĕтĕм Союзри научно-исследовательский институчĕн научнăй работникĕсем облаçри 25 района практикăллă ĕçпе пулăшнă.

ВКП(б) XVIII КОНФЕРЕНЦИЙĔ ЯЧĔПЕ ПЫРАКАН СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТУ

Слесарь Охотников тунă чаплă çитĕнӳ

АМУР ÇИНЧИ КОМСОМОЛЬСК, январĕн 6-мĕш. (ТАСС). 1-мĕш номерлă Госстройтрестăн электрослесарĕ комсомолец Аркадий Охотников январĕн 4-мĕшĕнче XVIII партконференци ячĕпе тăхтăна тăнă. Вăл 8.000 деталь туса хатĕрлеме заданине илнĕ. Ĕç процесĕне çăмăллатас тесе, Охотников юлташ ятарласах приспособлени хатĕрленĕ. Пĕрремĕш кунĕнче заданине 1.020 процент тултарнă, январĕн 5-мĕшĕнче — 1.203 процент, январĕн 6-мĕшĕнче — 1.450 процент. Охотников юлташ пĕтĕм заданине 4—5 кунта тултарма шутлать, план тăрăх ăна 43 кунта тултармалла.

Д. Концедалов паллă рекорд тунă

СЕРГО, январĕн 4-мĕш. (ТАСС). Паян çĕршывăн паллă горнякĕ Дмитрий Концедалов Пĕтĕм Союзри XVIII партконференци ячĕпе чаплă рекорд тунă. Вăл Сталин ячĕпе тăракан шахтăн участокĕнче хăйĕн сменинче 80 тăваткăл метр чавнă. Концедалов нормăна 1.160 процент тултарнă. Смена пĕтсен митинг пулса иртнĕ, митингра Алексей Стаханов тата Константин Петров юлташсем тухса сăмах каланă. Вĕсем ирминецсен коллективне партконференцине хатĕрленнĕ май, социализмлă ăмăртăва татах та анлăн сарса пыма чĕннĕ.

Конструкторсен техникăллă çĕнĕ япалисем

ЛЕНИНГРАД, январĕн 6-мĕш. (ТАСС). Макс Гельц ячĕпе тăракан машиностроительнăй заводри конструкторсем çак кунсенче пысăк çĕкленӳпе ĕçлеççĕ. Вĕсем Пĕтĕм Союзри XVIII партконференци уçăлнă куна техникăллă çĕнĕ япаласем тунипе кĕтсе илме йышăннă.

Инженерсем Кацкий, Мамлов, Аксельрод тата ытти юлташсем те февралĕн 15-мĕш тĕлне модернизированнăй автоматăн проектне туса пĕтереççĕ, вăл ĕç тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе 8 станок вырăнне ĕçлеме пултарать. Пружинăсем тумалли автомат конструкцileнĕ, вăл ĕç тухăçлăхне 4 хута яхăн ытларах ӳстерет.

Конструктор Плохих юлташ контрольнăй автомат проектне хатĕрлет. Çак автомат детальсене хăех механически виçет тата браковщике çак ĕçрен хăтарать.

ВКП(б) XVIII конференцийĕ ячĕпе

ИЕПРЕÇ. ВКП(б) XVIII конференцийĕ ячĕпе колхозсенче çитес çулхи стахановла вăйлă тырпулăн социализмлă ăмăртăва куллен-кун вăйланса сарăлса пырать.

Чăваш Тимешĕнчи «Большевик» колхоз членĕсем (колхоз председателĕ коммунист М. Егоров юлташ) ВКП(б) XVIII конференцийĕ ячĕпе социализмлă ăмăртăва чи малтан хутшăнса, конференци уçăлнă тĕле 600 гектар çинче юр тытса юлма, уя 6000 лав торф, 4000 лав тислĕк кăларма тата 3000 кубометр вăрман турттарса кăларма обязательство илнĕ.

Илнĕ обязательствăсене пурнăçласси-шĕн колхозниксем тăрăшса ĕçлеççĕ. Январĕн 1-мĕш тĕлне щитсемпе, çапăсемпе т. ыт. майсемпе 343 гектар çинче юр тытнă, уя 132 лав торф, 1500 лав тислĕк кăларнă. Вăрман хатĕрлев планне 41,2 процент тултарнă та ĕнтĕ.

«МОПР» колхоз членĕсем те ВКП(б) XVIII конференцийĕ ячĕпе социализмлă ăмăртăва хутшăнса, çитес çулта вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе конкретлă обязательствăсем илнĕ, хăйсем пек ĕçлеме «Большевик» колхоз членĕсене ăмăртăва чĕннĕ.

Халĕ колхозниксем хĕллехи агротехникăллă ĕçсене пурнăçласа пыраççĕ. Çак кунсенче уя 800 лав тислĕк кăларнă, 60 гектар çинче юр тытнă.

Дм. МИХАЙЛОВ.

Ĕçри хастарлăх пысăк

ВАРМАР. Сĕтел-пукансемпе спортинвентарь фабрикинчи рабочисен коллективĕ партин XVIII конференцийĕ уçăлнă тĕле 1941 çулхи икĕ уйăх планне тултарассишĕн кĕрешет. Фабрикăри стахановецсем парти конференцийĕ умĕнхи ăмăртура уйрăмах паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ. Акă, Александр Тимофеев (фуговщик), Владимир Петров (фрезеровщик), Иван Гаврилов (столяр) нормăна 120 процент таран тултарса пыраççĕ. Рабочисен ĕçри хастарлăхĕ пысăк, вĕсем хăйсем çине илнĕ обязательствăна тултарасса шанăх тăмалла.

Анчах чĕртăвар (йывăç), уйрăмах йĕлтĕр тумалли йывăç çитменни плана тултармашкăн чăрмантарать. Чăваш АССР Наркомлесĕн фабрикăна кирлĕ таран йывăç тупса пама мĕн кирлине халех тăвас пулать.

Ф. А.

Çуракине хатĕрленеççĕ

Шуркассинчи (Шăхасан р.) пуçламĕш парторганизаци хăйĕн пухăвĕнче Пĕтĕм Союзри XVIII партконференцине пысăк çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илесси çинчен ыйту лартса сӳтсе-явнĕ. Пуху партконференцине колхозсенче çуракине хатĕрленес ĕçе вăйлатнипе кĕтсе илме йышăннă. Халĕ ялсовета кĕрекен колхозсенче партконференци ячĕпе ăмăрту сарăлса пырать, колхозсем пуçламĕш парторганизаци йышăннă решенине ăнăçлăн пурнăçлаççĕ. Коммунистсем колхозниксем хушшинчи ăмăртăва ертсе пыраççĕ.

Шуркасси колхозĕнче стахановла шкул тунă. Унта колхозниксемпе коммунистсем, пурĕ 23 çын, агротехникăна вĕренеççĕ. «Большевик» колхоз тăватă тонна фосфорит çăнăхĕ кӳрсе килчĕ, вырăнти удобренисене пухаççĕ, плугсене юсаççĕ. Коммунист Егоров юлташ ертсе пыракан «Майăн пĕрремĕш» колхоз ялхуçалăх машинисене юсаса пĕтерчĕ. Вăрлăхсене сортласа тасатнă. Уйра юр тытса купалантарма шутсем тухса лартнă.

Çапла Шуркасси ялсоветне кĕрекен колхозсем парторганизацине вăрлăхсене сортласа çитернипе, ялхуçалăх машинисене юсаса пĕтернипе, пĕр сăмахпа каласан, çуракине хатĕрленсе çитнипе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ.

В. Антонов.

Вăрнарти машинно-трактор станцин вунă çул тултарчĕ

1930 çулти декабрь уйăхĕнче Вăрнарта машинно-тракторнăй станци организацileнĕ. Унтанпа ĕнтĕ вунă çул иртрĕ. Малтанхи вăхăтра станцăри тракторсен вăйĕ 270 лаша вăйĕ чухлĕ шутланнă пулсан, халĕ вĕсен вăйĕ 1.140 лаша вăйĕ чухлĕ хисепленет. Халĕ колхозсен уйхирĕсенче, малтанхи вăхăтра «Фордзон-Путиловец» ятлă вăйсăр тракторсем вырăнне, вăйлă, çирĕп, пысăк тухăç паракан «ЧТЗ-С-60», «СТЗ-НАТИ», «ХТЗ-НАТИ» тракторсем ĕçлеççĕ. Кусемсĕр пуçне машинно-тракторнăй станцин паркĕнче 17 комбайн, 24 тракторнăй сеялка, 23 сложнăй молотилкă тата ытти машинăсем йышлăн шутланаççĕ.

Машинно-тракторнăй станци 85 колхозăн 26400 гектар çĕрĕ çинче ĕçлесе тăрать. Ялхуçалăх ĕçĕсем çулран-çул механизацileнсе пыраççĕ. 1931 çулта тĕп ĕçсенчен 10,5 процентне машинăсен вăйĕпе тунă пулсан, 1940 çулта 60 процентне тунă. Çакă вăл колхозниксем ĕçне чылаях çăмăллатрĕ, вĕсен ĕç тухăçлăхне ӳстерчĕ.

Трактористсем çĕнĕ тата сложнăй техникăна вĕренсе пынипе, çавăн пекех ĕçе тĕрĕс организацileнипе тракторсемпе ĕçлемелли плана ытлашшипех тултараççĕ, вĕсем колхозниксемпе пĕрле тырпул тухăçне ӳстересшĕн кĕрешеççĕ. МТС хăйĕн планне тăтăшах тултарса пырать. Сăмахран, 1931 çулта 15 лаша вăйлĕ машин трактор пуçне 216 гектар ĕçленĕ пулсан, 1940 çулта 622 гектар ытларах ĕçленĕ, е ĕç тухăçлăхĕ 288 процент ӳснĕ. Г. Мишаков коммунист ертсе пыракан бригада 1940 çулта хăйĕн планне 119 процент тултарнă. Мишаков юлташ Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ, ăна Главвыставком пысăк кĕмĕл медаль парса наградăланă. А. Миговаров МТС организацileнĕренпех, 1938 çултан пуçласа трактор бригадин бригадирĕ пулса ĕçлет. Унăн бригади 1940 çулта тракторсемпе ĕçлемелли çулталăк планне 146 процента яхăн тултарнă, 661 килограмм горючи перекетленĕ.

МТ Станцинче çакăн пек çынсем сахал мар. 1940 çулта 14 бригадăран 12 бригада хăйсен планĕсене ытлашшипех тултарнă. МТС иртнĕ çулта пур ĕçсем тăрăх та плана ăнăçлăн пурнăçланă.

Трактористсем—Г. Цветков, А. Черкова, А. Тимофеев, машинистсем — П. Асонов, А. Григорьев юлташсем иртнĕ çулта паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлерĕç.

МТС сеялкăсемпе ĕçлес тĕлĕшпе те начар мар тĕслĕхсем кăтартать. 1935 çулта кашни сеялкăпа 108,8 гектар акнă пулсан, 1940 çулта — 256,6 гектар акнă.

Уйхир ĕçне механизацileни уйхир ĕçĕн агротехникине вăхăтра пурнăçласа пыма май парать. Çавна май, колхозсенче тырпул тухăçĕ çулран-çул ӳсет. 1931 çулта машинно-тракторнăй станци ĕçлесе тăракан колхозсем пăтăм шутпа кашни гектартан 9 центнер, 1940 çулта 15 центнер тĕштырă туса илнĕ. Уйрăм колхозсем унтан та ытларах тухăçлă тырпул пуçтарса кĕчĕç. Сăмахран, Сталин ячĕпе тăракан колхоз — 180 пăт, Çавалкас-Хирпуçĕнчи колхоз — 125 пăт тĕштырă туса илнĕ. Молотов, Ворошилов, Киров, Крупская, Чапаев ячĕпе тăракан, «Ландыш», «Пионер» тата ытти чылай колхозсем кашни гектартан çĕршер пăт ытларах тырпул пуçтарса кĕнĕ.

Çакăн чухлĕ пысăк тухăçлă тырпула тăпрана тарăн тата вăхăтра сухаласа çемçетнине пула, агротехникăн комплексĕсене вăхăтра пурнăçа кĕртсе пынине пула тунă. МТС ĕçлесе тăракан колхозсенче сортлă вăрлăхсем тата минеральнăй удобренисемпе вырăнти удобренисем çине, çавăн пекех сумкурăксемпе кĕрешес ĕç çине ытларах çавăрăнса пăхма пуçларĕç. Çак ĕçре колхозсене МТС пысăк пулăшу парать. Вăл республикăра пуçласа çĕре 20—22 сантиметр тарăнăш сухалама тытăнчĕ. Çакă вара ӳсен-тăрансене ӳсме аван условисем туса парать, çавна май тырпул тухăçĕ хăпарать. Колхозсен уйхирĕсенче тырпул тухăçне ӳстерекен майсенчен пĕри вăл кĕрхи çĕртме сухи пулса тăрать.

Машинно-тракторнăй станцин ĕçне татса паракансем вĕсем — техникăна вĕренсе алла илнĕ кадрсем. Çавсем ĕнтĕ МТ Станцине çирĕп ура çине тăратрĕç. Вунă çул хушшинче 672 тракторист, 185 машинист, 49 комбайнер, 16 механик, 17 шофер, бригадирсем 38 çын, 138 прицепщик, 156 весовщик вĕрентсе хатĕрленĕ.

Чылай трактористсемпе комбайнерсене ертсе пыракан ĕçе куçарнă. Тракторист пулнă Ремизов юлташ халĕ МТ Станцин старший механикĕ пулса ĕçлет. Пирĕн трактористсем хушшинче Ишлей МТС старший механикĕ Кириллов юлташ çитĕннĕ. МТС-ри трактористсенчен 70 проценчĕ 3—4 çул хушши ĕçлет.

Машинно-тракторнăй станци вунă çул тултарнă юбилея унăн коллективĕ тракторсене юсамалли тăваттăмĕш квартал планне тултарнипе кĕтсе илчĕ. Квартал хушшинче план тăрăх, 6.600 тенкĕлĕх кивĕ пайсене реставраци тата çĕнĕрен пайсем тумалла пулнă пулсан, 8 пин тенкĕлĕх тунă.

Çитĕнӳсене палăртнипе пĕрлех, çитменлĕхсене те асăнмасăр хăварма çук. МТС хура çĕртме тумалли тата хăмăл суханамалли плансене çулсеренех тултараймасть. 1940 çулта комбайнсемпе çителĕксĕр усă курнă, çавна май тырпула уйран пуçтарса кĕртесси районра кая юлчĕ.

МТС коллективĕ ВКП(б) Центральный Комитечĕ Пĕтĕм Союзри XVIII партконференцине пухасси çинчен пĕлтернине сӳтсе-явнă хыççăн февралĕн 15-мĕш тĕлне мĕнпур тракторсене, вĕсенчен кăкарса ĕçлемелли машинăсене, комбайнсен моторĕсене юсаса пĕтерме обязательство илчĕ. Халĕ эпир мĕнпур вăл ялхуçалăх машинисене юсас ĕçе хуратпăр.

МТС коллективĕ хăйĕн умне 1941 çулта тракторсемпе ĕçлемелли плана пур ĕçсем тăрăх та тултарас задача лартнă. Эпир хамăр коллективпа МТС умĕнче тăракан задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртессе шанатпăр.

П. ОСИПОВ.
Вăрнар МТС директорĕ.

И. АНДРЕЕВ.
Старший агроном.

ТАСС опровержений

Ютçĕршывсенчи хаçатсенче çакăн пек хыпар сараççĕ: ССР Союзĕн Румынири полпредне Лаврентьев юлташа Бухарестран каялла чĕнсе илеççĕ пулать.

ТАСС çапла пĕлтерме полномочи илнĕ: çавăн пек пĕлтерни тĕрĕс мар, пуçран шухăшласа кăларнă япала.

Ленин кунĕсене хатĕрленни

МУСКАВ, январĕн 6-мĕш. (ТАСС). «Каучук» заводра В. И. Ленин вилнĕренпе вунçичĕ çул çитнине асăнса ирттерме хатĕрленеççĕ. Агитаторсем литература пухаççĕ, цехсенчи пухусенче докладсем туса пама хатĕрленеççĕ. Çитес кунсенчех агитаторсен семинарне ирттереççĕ. Ленин музейне кайса курма экскурсисем чылай организацileççĕ.

Парткабинетра В. И. Ленин ячĕпе литературăпа художествăн пысăк выставкине организацileççĕ.

Мускаври Ломоносов ячĕпе тăракан университет коллективĕ те В. И. Ленин вилнĕренпе вунçичĕ çул тултарнине асăнса ирттерме хатĕрленет. Университетра «17 çул Ленинсăр, Ленин çулĕпе, Сталин юлташ ертсе пыпипе» ятлă выставка организацileççĕ.

В. И. Ленин пурнăçĕпе тата ĕçĕсемпе çыхăнса тăракан вырăнсене экскурсине каяççĕ

Мускавра Владимир Ильич Ленин пурнăçĕпе тата революциллĕ ĕçĕсемпе çыхăнса тăракан вырăнсем çĕр вырăн ытла шутланаççĕ.

В. И. Ленин вилнĕренпе вунçичĕ çул çитнĕ май Мосгорисполкомăн центральнăй экскурсионнăй бюровĕ Ленин ĕçленĕ вырăнсене экскурсисем организацilет. Пĕрремĕш экскурси январĕн 8-мĕшĕнче пулнă.

Экскурси маршрутне Павелецкий вокзал патĕнчи павильона кайса курасси кĕрет, унта «У—127» паровоза майлаштарса лартнă.

1924 çулта çав паровозпа Герасимовская (хальхи Ленинская станцийĕ) платформинчен В. И. Ленин тупăкне Мускава илсе пынă.

(ТАСС).

Профсоюзсен йĕлтĕр кросне лайăх организацileнсе ирттерер

ВЦСПС секретарĕпе К. И. Николаева юлташпа калаçни

Йĕлтĕр спортне профсоюз членĕсен анлă массисем вĕренсе алла илме пултараççĕ тата ăна тума та тивĕçлĕ. Вăл оборона ĕçĕнче питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çакна май ĕнтĕ профсоюзсем çулсеренех ирттерекен йĕлтĕр кросĕ пысăк вырăн йышăнса тăнине кăтартса парас пулать. Вăл кроса çĕршер пин ĕççынни хутшăнать. Сăмахран, 1940 çулта кроса 355.000 çын хутшăннă, 1941 çулта кросс участникĕсен хисепĕ сахалтан та икĕ хут пысăкрах цулмалла.

Профсоюзсен нрĕклĕ спорт обществисенчен чылайăшĕ кроса хатĕрленес ĕçе начар мар туса ирттернĕ. Çакă вăл пĕрремĕш кун итогĕсенчен курăнать. Молотов хулинче, çанталăк сивĕ тата çилтăманлă пулнă пулсан та, 1.500 физкультурник старта тухнă, вĕсенчен 1.242 çынни «Готов к труду и обороне» комплексăн нормисене панă. Нормăсем панисен проценчĕ çапла пысăк пулни — участниксем лайăх хатĕрленнин результатĕ. Иркутскра та кросс начар мар иртет, унта январĕн 5-мĕшĕнче старта 2.500 çын тухнă. Кунта кросс январĕн 1-мĕшĕнче пуçланнă, халех те ĕнтĕ 3.000 çын нормăсем панă.

Мускавра пирвайхи кун старта 4.000 çын тухнă. Участниксенчен çурри кăна йĕлтĕр нормисене панă. Çакă вăл столицăри спорт обществисенчен нумайĕшĕ начар хатĕрленнинне кăтартса парать. «Зенит» обществи результатсăран туфлисем параççĕ. Ученицăсен тухса çӳремелли костюмĕ — хура-кăвак е хура пусмаран сĕленĕ юбка тата çӳлăса тăракан çухаллă гимнастерка. Çавăн пекех вĕсене ĕçленĕ вăхăтра тăхăнмалли костюм параççĕ. Хĕрачасен, арçын ачасем пекех, училище петлицисене тата отличи паллисене сакса çӳремелле.

Ремесленнăй училищесемпе чугунçул училищисенче вĕренекен хĕрачасен тумтир форми

Ремесленнăй тата чугунçул училищисенче темиçе пин хĕрача вĕренет, вĕсем — фабрикăпа завод ученичествин шкулĕсенче вĕреннĕ, халĕ ремесленнăй училищесене илнĕ хĕрачасем. Сак кунсенче Ес вăйĕсен Резервисен СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Главнăй Управленийĕ вĕсем валли тумтир форми çирĕплетнĕ. Хĕрачасене шинель, хура пусмаран хатĕрленĕ берет тата

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Çамрăк коммунистсем хушшинче ытларах ĕçлемелле

1940 çулта Красноармейский районри парторганизаци ретне малта пыракан сынсем чылай хутшăнчĕç. ВКП(б) членне 20 сынна, ВКП(б) кандидатне 43 сына илнĕ. Парти ретне илнисем хăйăр тăван çĕршыва чĕререн парăннăсынсем, патриотсем, колхозниксем, колхоз председателĕсемпе бригадирсем, ялсовет работникĕсем пулса ĕçлеççĕ. Иртнĕ çулта колхоз председателĕсене 5 сынна, уй-хир ĕç бригадисен бригадирĕсене 4 сынна, фермăсенче ĕçлекенсене 2, рядовой колхозниксене 5, ялсовет работникĕсемпе учительсене 17 сынна парти ретне илнĕ.

Калинин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Павлов юлташ парти ретне кĕлтĕр кĕчĕ. Павлов коммунист ертсе пыракан колхоз ялхуçалăх ĕçĕсене инăçлăн вĕçлерĕ, государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра тултарчĕ, районра малти рете тухрĕ. Вăтам шутпа кашни гектартан 105 пăт тĕттырă пуçтарса кĕнĕ.

1940 çулта партине кĕнĕ юлташсем, Самахран, «Правда» колхозри малта пыракан бригадăн бригадирĕ П. Степанов, «Маяк» колхозри бригадир М. Семенов коммунистĕм лайăх ĕçлеççĕ, ыттисене пример кăтартаççĕ, ялхуçалăх çулне пысăк пахалăхпа вĕçлерĕç, тухăçлă тырпул туса илчĕç. Ялсовет исполком председателĕсенĕн Захаров (Байсубино), Шихранов (Тĕрер), Ильин (Карай), М. Григорьев (Шупуç) юлташсене парти ретне илнĕ. Çак çамрăк коммунистсем большевизма тимлĕхпе ĕçлесе пынипе хăйсем ретне пыракан ялсоветсен ĕçĕсене нумай лайăхлатрĕç.

ВКП(б) райкомĕн тата пуçламăш парторганизацисен умĕнче тăракан задача — çамрăк коммунистсене большевикла воспитанц парасси, ĕçлеме вĕрентесе пырасси пулса тăрать.

1939 çулта парти ретне илнĕ чухне нумай йăнăшсем тунă пулсан, 1940 çулта партие илес ĕçри çитменлĕхсене тăрлетнĕ. Пĕлтĕр ВКП(б) кандидатне кĕме 51 çын заявлени панă, вĕсенчен 6 сынна парти ретне илмен. Тĕрерти пуçламăш парторганизаци Я. хушаматлă сынна ВКП(б) членĕн кандидатне, НКВД райотделенинчи пуçламăш парторганизаци А. гражданина ВКП(б) членĕн кандидатне илнĕ. Анчах парти райкомĕ калаçса, тĕрĕслесе пăхнă хыççăн, вĕсем парти ретне кĕме юрăхсăр пулни палăрнă. Вĕсем йăла тĕлĕшĕнчен пăсăлнă, часчасах ĕçнĕ. Паллах, парти райкомĕ унашкал çынсене парти ретне илмен.

Партие кĕме рекомендаци паракансем те, хăшпĕрисем, устава пăхăнмаççĕ. ВКП(б) членĕсем Ф. Михайлов, Н. Катков юлташсем Т. гражданина рекомендаци панă. Райкомра тĕплĕн тĕрĕслесен çав гражданин партие кĕме юрăхсăрри палăрчĕ.

Организацири 179 çынран 93 çын кандидатсем шутланаççĕ. 93 кандидатран 45 юлташăн кандидатра тăрас стаж иртсе кайнă. Сăмахран, Орлова юлташ 1931 çултанпа, Яковлев В. 1934 çултанпа кандидатра тăраççĕ, 1937 — 1938 çултанпа кандидатра тăракансем пурĕ 11 çын. Çакă вăл кандидатсем хушшинче политикăллă воспитани ĕçĕ пачах çителĕкмĕрринне, нумай кандидатсене парти пурнăçне активлăн хутшăнтарманнине кăтартса парать.

Малашне ВКП(б) райкомĕпе пуçламăш парторганизацисен çак çитменлĕхсене пĕтересшĕн большевикла тăрăшни кирлĕ. Парти ретне чăн та малта пыракан колхозниксене, рабочисене, совет интеллигенцине илмелле.

ВКП(б) райкомĕн тата пуçламăш парторганизацисен çамрăк коммунистсем хушшинче ĕçлессине вăйлатмалла, вĕсене парти историне вĕренме тата ĕçре ӳссе пыма пулăшмалла.

Л. КОНСТАНТИНОВ.

Парторганизацисен комсомола пулăшса пымалла

ВЛКСМ Елчĕк райкомĕ ытти райкомсем пекех ларусемпе канашлусем ирттерет, кирлĕ решенисем йышăнать. Вырăнсенчи пуçламăш организацисене коммунистла воспитани парас, предприятисемпе учрежденисенчи тата колхозсенчи хăйсен пултарулăхне кăтартнă, малта пыракан çамрăксене комсомол ретне явăçтарас ĕçре пулăлать.

Комсомолецсен йышĕ ӳссе пырать. 1940 çулта нумай çамрăка комсомол ретне илнĕ, комсомолецсенчен 29 сынна ВКП(б) кандидатне илнĕ. Хальхи вăйăтра районри организацисенче 1024 комсомолец, комсомол пуçламăш организацисем 76 шутланаççĕ.

Комсомол организацисене кулленхи ĕçре пулăшса пырасси — парторганизацисен умĕнче тăракан задача. Çакна уйрăм парторганизацисем йĕркеллĕ пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Сăмахран, Суринскри парторганизаци хăйĕн ухăвĕнче комсомол организацин ĕçĕсем çинчен сӳтсе-явса, хаклă сĕнӳсем парать. Аслă Елчĕкри пуçламăш парторганизаци те комсомол организацине кулленех пулăшать.

Анчах, хăшпĕр парторганизацисем комсомол ĕçĕпе пачах интересленмеспĕр. Тăрмăшри, Таяпа Ентрири парторганизацисем комсомол организацин ĕçĕсем çинчен отчетсем итлемен. Вĕсем кулленхи ĕçре пулăшса пымаççĕ.

Çак иртнĕ кунсенче комсомол пуçламăш организацисен секретарĕсен тата вĕсем заместителĕсен семинарĕ пулса иртрĕ. Декабрь уйăхĕнче пур организацисенче те пулса иртнĕ пухусенче ВЛКСМ Центральный Комитечĕ комсомолецсене учета илессипе член укçи пухасси çинчен йышăннă решенине тата Карело-Финн ССР комсомолец-физкультурникĕсем чĕнсе каланине сӳтсе-явнă. Комсомолсем хушшинче физкультура ĕçĕ кăштах лайăхланма тытăнчĕ.

ВЛКСМ райкомĕн çитменлĕхсем те пур-ха. Хăшпĕр комсомол организацисенче член укçине вăхăтра пухмаççĕ. «Ново-Ищеряково» колхозри комсомол пуçламăш организацинче сентябрь, октябрь, ноябрь уйăхĕсемшĕн член укçи пухса пĕтермен. «Малалла» тата Киров ячĕпе тăракан колхозсенчи комсомол организацисем колхоз производствине хутшăнмаççĕ.

Малашне пуçламăш парторганизацисен комсомол организацисене тăтăшах пулăшса пымалла. Колхозсенчи, предприятисемпе учрежденисенчи комсомол пуçламăш организацисен ĕç дисциплинине çирĕплетессишĕн, комсомолецсен политикăллă пĕлӳлĕхне ӳстерсе пырассишĕн кĕрешмелле.

А. ДУДКИН.

Ĕçе мĕн чăрмантарать?

Кушкă ялĕнчи (Елчĕк р.) туллимар вăтам шкулăн залĕнче çынсем туллиех: ялти интеллигенци çеç мар, колхоз активĕ те пуçтарăннă. Клуб пулнă пулсан е вулав çурчĕ те пулин йĕркеллĕ ĕçленĕ пулсан çавăнта çеç пуçтарăнмалла та, анчах вулав çуртĕнче тӳсме çук сивĕ пулнипе, клуба халиччен те тума пуçламаннипе, çавăн пек пухусене час-часах шкултах туса иртереççĕ. Çак ялти «КИМ» колхоз Елчĕк районĕнчи лайăх колхозсенчен пĕри пулса тăрать. Иртнĕ çулхине те унăн дохочĕ—11,443 центнер, укçан 106 пин тенкĕ пулнă. Кăçал колхозниксем ĕçкунĕ пуçне 6-шар килограмма яхăн тĕттырă тата 50 пус укçан илеççĕ. Пахча-çимĕç икшер килограмм лекет. Вăтамран пĕр гектартан 17,56 центнер тырă илнĕ. Кăçал Харитонов колхозник семьи 1157 ĕçкунĕ туса 6942 килограмм тĕттырă илнĕ. Баскаков семьи 1175 ĕçкунĕ туса 7050 кгр. тĕттырă, Тарасов хăй пĕрченех 471 ĕçкунĕ туса 2.886 кгр. тĕттырă илет. Ун пеккисем тата та нумай. Питĕ пуян пурăнаççĕ колхозниксем. Ахаль мар ĕнтĕ «КИМ» колхоз Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинче 2-мĕш степеньлĕ диплом илме тивĕçлĕ пулнă. «КИМ» колхозăн çитĕнĕвĕсем пысăк, анчах пĕр çитменлĕх пур унăн. Колхозăн паянччен те клуб çук. Ун çинчен колхозниксем те, ялти интеллигенци те, комсомолецсем те пĕрмаях калаçаççĕ. Пурне те хумхантарать ку ыйту.

Культурăллă вăй та Кушкă ялĕнче çавтери пысăк: учительсем—12 çын, агрономсем—2, трактористсем—10, пĕр врач. Партире тăракансем—6 çын. Комсомолецсем 17 çын. Ялта хутпĕлменлĕхе пĕтернĕ. Колхозниксем кăçал 226 экземпляр тĕрлĕрен хаçат-журналсем илсе тăраççĕ. Пĕр В. Ермаков çеç ултă тĕслĕ хаçат-журнал илсе тăрать: «Комсомольская правда», «Красная Чувашия», «Чăваш Коммуни», «Çамрăк большевик», «Хатĕр пул», «Пионер сасси». Ик-виç хаçат илекенсем колхозра сахал мар. Пурте хăйсен культурлăхне ӳстерме тăрăшаççĕ. Колхоз правленийĕ те ку тĕлĕшпе кирлĕ таран тăрăшсан, «КИМ» колхоз халиччен культура тĕлĕшпе те тĕлĕнмелле çитĕнӳсем тунă пулĕччĕ. Анчах, правлени председателĕ В. Дергунов юлташ час-часах культурăллă-массăллă ĕçе çителĕклĕ хакламан, ялти интеллигенципе çирĕп сыхăну тытса ĕçлемен пирки культурăллă ĕç колхозра япăх пырать.

Колхозăн клуб валли çурт та хатĕр. Ана тахçанах туса пĕтернĕ, анчах клуб валли уйăрса хунă çурта, клуб тăвас вырăнне колхоз правленийĕ ялхуçалăх продукци склачĕ вырăнĕнче усрать.

Нумаях пулмасть ялти интеллигенцин пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху Федякино ялĕнчи интеллигенци чĕнсе калаканине чĕререн ырласа, малашне культурăллă-массăллă ĕçе вăйлатас шутпа вулав çурчĕ çумĕнче 13 сынтан совет организацилерĕ. Тĕрлĕрен кружоксен ĕçне пуçарса ямалли план йышăнчĕ. Ĕçе кая хăвармасăр лекторсен группине халех тĕрлĕ темăпа лекцисем, докладсем, каласусем пуçарса яма хушрĕ. Клуба туса пĕтерсенех спектакльсем тухма пуçлама, унччен пĕр чăваша пьеса хатĕрлеме йышăнчĕç пухура.

Çапла ĕнтĕ «КИМ» колхозра культурăллă-массăллă ĕçе çĕнĕрен организацилесе кирлĕ таран çӳллĕ вырăна çĕклес тесен малашне колхоз правленин ялти интеллигенципе тачă сыхăнса ĕçлеме тăрăшас пулать, вĕсен пĕлĕвĕпе çителĕклĕн усă курма вĕренес пулать. Хальхи вăхăтчен ĕçе чарса тăнă чăрмавсене сирсе ярса çĕнĕлле, большевикла ĕçлеме тытăнас пулать.

Халиччен ку ĕçре мĕн кансĕрлесе тăни ӳсçăнах курăнать, вăл—колхоз правлени те, ялсоветĕ те хуçалăх ыйтăвĕсемпе çеç ĕçлесе культурăллă-массăллă ĕçе хака хумасăр, ун çинчен пĕтĕмпех манса кайнинче пулнă. Халĕ колхозниксем татах та культурлăрах пурăнас тесçĕ, вĕсем лекцисем, докладсем итлесшĕн, вĕсем спектакльсем курасшăн, кино-картинăсем пăхасшăн. Вăл ĕçсене туса пыма Кушкă ялĕнче культурăллă вăй çителĕклĕ. Пухура тухса каланисем те çавăн çинчен тепĕр хут асăрхаттарчĕç. Ĕçлеме, пикенсе ĕçлеме тытăнас пулать.

С. ЯЛАВИН.
Н. РЫБКИН.

Икĕ миллиард та 640 миллион çын илсе çӳренĕ

Мускаври трамвайсемпе, метропа, автобуссемпе, троллейбуссемпе тата юханшывсенчи катерсемпе 1940 çулта 2 миллиард та 640 миллион çынна яхăн, 1935 çулпа танлаштарсан, 600 миллион çын ытларах çын илсе çӳренĕ.



Ригăра хулари мĕнпур трамвай линийĕсем тăрăх агитпоезд çӳреме пуçланă. Флагсемпе, лозунгсемпе тата плакатсемпе илемлетнĕ икĕ трамвай вагонĕнче агитколлектив ĕçлет, унтах духовой оркестр тата аккордеонсен квартечĕ пур. Уперч ĕн çинче: агитпоезд Рига хулинчи урамсенчен пĕринче. (Фото ТАСС).

ХАÇАТСЕНЕ ПĂХСА ТУХНĂ ХЫÇÇĂН

ТАТАХ „КОММУНИЗМШĂН“ ХАÇАТ ПИРКИ

1940 çулти август уйăхĕнче ВКП(б) Центральный Комитечĕ районри хаçатсем çинчен уйрăм постановлени йышăнчĕ. Çак постановлени районри хаçатсен работникĕсем умне çивĕч задачăсем лартрĕ тата вĕсен ĕçне çĕнетсе урăхлатма паха кăтартусем пачĕ. Çапла вара тăрăшса ĕçлеме вĕсене лайăх условисем ӳтуса панă.

ВКП(б) Центральный Комитечĕн постановленийĕ тухнă хыççăн пирĕн республикăри чылай районсенчи хаçатсем хăйсен ĕçĕсене лайăхлатрĕç. Хăшпĕр райхаçатсем хăйсен ĕçне урăхлатса çĕнетес тĕлĕппе халичченех вăрахăн ĕçлеççĕ-ха. Канаш районĕнчи «Коммунизмшăн» хаçатах (редакторĕ Антонов юлташ) илер. «Коммунизмшăн» хаçатăн номерĕсене пăхса пырсан, хаçатăн содержанийĕпе культури лайăхланса пынине курма питех те хĕн. Хаçатăн кашни номерĕнчех политикăллă йăнăтсене курма пулать, грамматикăллă тата стилистикăллă йăнăтсен вĕçне-хĕрне те тупас çук. 1940 çулти декабрĕн 18-мĕшĕнче тухнă номерте ялхуçалăх выставкине хатĕрленесси çинчен пĕр сăмах та тупас çук.

Тӳрех каламалла, пирĕн колхозниксем, ялхуçалăх ĕçĕн специалисчĕсем, «Коммунизмшăн» хаçатра ĕçлекенсем пек, пурнăçран юлмаççĕ. Вĕсем 1940 çулти Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставки кăтартса панă опытсене çирĕплетсе, 1941 çулта уçăлакан выставка участникĕ пулассишĕн хĕрсе кĕрешеççĕ.

Райхаçатра ĕçлекенсем пурнăçран юлса пыраççĕ. 4-мĕш кварталăн уçа-тенкĕ пухасси ялсоветсем тăрăх мĕнле пынине кăтартакан ноябрĕн 11-мĕшĕнчи сводкăна декабрĕн 18-мĕшĕнче тин пичетлесе кăларнă. Кама кирлĕ-ши пĕр уйăх кая юлса пичетленĕ сводка?

Хаçат тепĕр чухне суйма та ӳркенмест. Декабрĕн 18-мĕшĕнче тухнă номерте «Кăçалхи ялхуçалăх çулĕн итогĕсем» ятлă статьяра «Железнодорожник» ялхуçалăх артельне Таловскри тесе ĕнентересшĕн. «Колхозниксем ку ĕçре Таловскри «Железнодорожник» артель колхозниксен ĕç опычĕсемпе анлăн усă курса ĕçлерĕç», тесе çырнă. Кама паллă мар-ши «Железнодорожник» ялхуçалăх артелĕ Таловскра мар, Таловский районра пулни?

Декабрĕн 22-мĕшĕнче тухнă номерте «Выполнить годовой план привлечения вкладов» статьяра: «Вкладчики знают, что внося свободные средства на сберкнижку, они тем самым способствуют дальнейшему укреплению хозяйственной и оборонной мощи нашей родины». Ытлашши укçана перекет кассин кĕнекине хываççĕ-ши вара?

Декабрĕн 26-мĕшĕнче тухнă номерте «Ялсовет исполкомĕсен тата колхоз председателĕсен канашлăвĕ» ятлă статьяра çакăн пек «предложени» пур: «Акă, Кивĕ Ахпуртри Калинин ячĕпе тăрăх 700 км. кубометр е километр вăрман турттармалла пулнă пек тухать. Ана: «Европа колонийĕсен» темелле пулнă.

Çакăн пек тумхахсемпе тухать «Коммунизмшăн» хаçат, çавăн пек муталасçĕ чăваш чĕлхине. Анчах вĕсен яхăн ĕçĕ хаçат вулакансене тарăхтарать.

«Коммунизмшăн» хаçатăн редакторĕ Антонов юлташ хăйĕн хаçатне мĕн чухлĕ те пулсан редакцилет-ши, вулать-ши? Хаçата культурăллă, лайăх содержаниллĕ кăларассишĕн тăрăшать-ши? Çук пулĕ. Большевикла тимлĕхпе тăрăшса ĕçлесен, большевикла пичетĕн хисеплĕ ятне чысласан, кун пек пулмĕччĕ.

Редакци работникĕсем чăваш чĕлхине çакăн пек пăснине, хаçатăн страницисене вараланине татах та нумай илсе кăтартма пулать.

Тӳрех каламалла, «Коммунизмшăн» хаçат редакцинче чăвашсем ĕçлеççĕ пулсан та, чăваш чĕлхине пĕлмеççĕ. Вĕсем чăваш чĕлхине, грамматикине, орфографине пачах пăхăнмаççĕ. Вĕсемшĕн хăйсен меслечĕ пултăр. Вĕсем значок вырăнне значек, беспартийнăйсен вырăнне беспартинăйсен, беспартийнăйсен е беспартийнăсен, партгруппорг вырăнне партгруппăрг, кооператив вырăнне кооператив, сеялкăсене вырăнне сеялкене е сеялкĕсене, профсоюз вырăнне профзоюз, партбюро вырăнне партбюрă, уполномоченнăй вырăнне уполноченный т. ыт. те çыраççĕ.

Чăваш сăмахĕсене вырăнсăрах çырулăхран кăларса переççĕ: техучеба, справочный стол, собранисем, совещанисем, инициативлăх т. ыт. те çыраççĕ. Та, те союзсене пĕтĕçтерсе лартаççĕ.

Çакăн пек тумхахсемпе тухать «Коммунизмшăн» хаçат, çавăн пек муталасçĕ чăваш чĕлхине. Анчах вĕсен яхăн ĕçĕ хаçат вулакансене тарăхтарать.

«Коммунизмшăн» хаçатăн редакторĕ Антонов юлташ хăйĕн хаçатне мĕн чухлĕ те пулсан редакцилет-ши, вулать-ши? Хаçата культурăллă, лайăх содержаниллĕ кăларассишĕн тăрăшать-ши? Çук пулĕ. Большевикла тимлĕхпе тăрăшса ĕçлесен, большевикла пичетĕн хисеплĕ ятне чысласан, кун пек пулмĕччĕ.

КРИТИКĂПА БИБЛИОГРАФИ

Паха кĕнекене начар куçарнă

Марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсене чăвашла куçарас ĕç юлашки çулсенче чылай лăхланчĕ. Çак ĕçе туса пыма квалификациллĕ кадрсене хутшăнтарнă. ВКП(б) обкомĕн комиссийĕ редакцилепине ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ» тата Сталин юлташăн «Ленинизм ыйтăвĕсем» ятлă кĕнеки пичетленсе тухрĕç. Вĕсене куçарса редакцилесе кăларни кĕнекесене куçаракансемшĕн лайăх ĕçлĕх пулса тăрать.

Ленинăн «Империализм—капитализăн чи çӳлти сыпăкĕ» ятлă кĕнекин çĕлтерĕшĕ питех те пысăк. Çак паха кĕнекене çырас тĕлĕшпе Ленин 1915 çулăн çурринчен пуçласа 1916 çулти июль уйăхĕччен ĕçленĕ. Вăл кĕнекене Ленин рабочисем тата ĕççыннисем ăнланмалла çырнă. Унăн малти листи пинех çак кĕнеке «популярнăй очерк» çулнине Ленин паллă тунă.

Ленинăн çак кĕнекинче вунă сыпăк. Çалтанхи ултă сыпăкĕнче империализмăн тĕп паллисем çинчен ăнланнă; тăвата сыпăкĕнче империализм вăл — пролетариатăн социальнăй революцийĕ умĕнхи тапхăр пулнине пĕлĕн кăтартса панă.

Капитализм аталанăвĕ производство концентрацийĕ патне илсе çитерет, çак концентраци никĕсĕ çинче монополлĕ пĕрлешӳсем пулса каяççĕ. Производство концентрацине пирки монополисем шăтса тухаççĕ.

Картельсем, синдикатсем, трестсем пулса тăнине май, ирĕклĕ конкуренци монополи пулса каять. Монополистсен союзĕсем «организацилеенессишĕн» кĕрешнĕ çĕрте хăйсен союзне кĕнекене предприятисене хĕссе пырааççĕ, ăсене путараççĕ, пĕтереççĕ.

Производство пĕрлешет. Анчах туса илнă продукцие валеçесси уйрăм çынпăлăх йĕркипех пулса пырать. Производство средствисемпе хатĕрĕсем капиталистсен пĕчĕк ушкăнĕсен алăнчех юлаççĕ. Вĕсемпе усă курса, эксплоататорсем рабочи класа тата ăсене пусмăрлаççĕ, эксплоатацисех пырать.

Монополистсен союзĕсем кризиссене пĕтереймеççĕ. Пĕтĕмпех урăхла, промышленноçри монополисем производствăри йĕркесĕрлĕхсене çивĕчлентерсе ярааççĕ. Картельсене пĕрлешнĕ индустрире те плансăр ĕçлесси пуçпулса тăрать. 1873 çулхи кризис хыççăн картельсем вăйлăн аталанса пыраççĕ. XIX ĕмĕр вĕçĕнче тата 1900—1903 çулсенчи кризис хыççăн картельсем хуçалăх пурнăçĕн никĕсĕсенчен пĕри пулса тăраççĕ. Капитализм—империализм пулса тăрать.

Монополисем пулса кайнипе пĕрле банксен ролĕ те питĕ ӳсет. Каярахпа вĕсем пĕтĕм хуçалăхлă тата политикăллă ĕçе хăйсен аллине çавăрса илеççĕ. Финанс капиталĕпе промышленнăй капитал пĕрлешсе, финанс олигархийĕ валли никĕс хываççĕ.

Учредительство укçисенчен, фонд хучĕсене кăларнинчен, государство заемĕсенчен тата ыттинчен банксем питĕ пысăк услам илеççĕ, монополистсем валли пĕтĕм обществăран хырçă тухаççĕ. Финанс капиталĕ ӳссе, концентрацилесе пырать, унтан вара финанс олигархийĕ пулса каять.

Финанс олигархийĕ чухне пĕтĕм тĕнче рыночне уйрăм шултра банксем, пысăк картельсемпе синдикатсем хушшинче валеçеççĕ. Финанс капиталĕ экономикăра кăна мар, политикăра та пуçпулса тăрать. Финанс олигархийĕ хăйĕн диктатурине капитализмлă государство урлă пурнăçа кĕртсе пырать.

Империализмлă чи пысăк державăсем пĕтĕм тĕнчери рыноксене валеçсе илеççĕ. Кая юлнă çĕршывсене тĕрлĕ майсемпе пăхăнтараççĕ те пĕрисенчен—колонисем, теприсенчен—çурмаколонисем туса хураççĕ. Кая юлнă çĕршывсене капитал кăларса, капиталистсем пысăк услам илеççĕ.

Капитализм империализма ӳссе çитнине кăтартакан паллăсем çакăн пек: 1) производствăпа капитал концентрацийĕ аталанса пырса питех те çӳлĕ вăйсене çитнĕ, халăх пурнăçĕнче татăклă роль йышăнса тăракан монополисене туса хунă; 2) банк капиталĕ промышленность капиталĕпе пĕтĕçсе кайнă, «финанс капиталĕн» никĕсĕ çинче финанс олигархийĕ пулса тăнă; 3) капитала урăх çĕршывсене кăларасси пит те паллă йышăнса тăма пуçланă; 4) капиталистсен тĕнчене валеçсе илнĕ монополиллĕ союзĕсем пулса тăнă тата 5) капитализмлă чи шултра державăсем пĕтĕм тĕнчери çĕрсен территорине валеçсе пĕтернĕ.

Империализм вăл — пролетариллĕ революци умĕнхи вăхăт. Вăл капитализмăн чи çӳлти сыпăкĕ çеç мар, çавăнпа пĕрлех капитализмла аталанăвăн юлашки тапхăрĕ те пулать. Империализм вăл — вилсе пыракан капитализм. Капитализм, паллах, хăйне хăех пĕтсе лармасть. Ана пролетариллĕ революци сирпĕтсе антарать.

Империализм пуçпулса тăнă вăхăтра капитализма хирĕç пролетариатăн тарăхăвĕ ӳсет. Капитализмлă çĕршывсен хăйсен ăшĕнчех революциллĕ взрывăн элеменчĕсем ӳссе вăйланса пыраççĕ, колонисенче тата пăхăнса тăракан çĕршывсенче революциллĕ кризис çибĕчленсе пырать.

Империализм условийĕнче капитализмăн экономикăллă тата политикăллă аталанăвĕ пĕртан мар пулса пырать. Капитализмăн хирĕçĕвĕсем çивĕчленсе çитеççĕ. Вара тĕнчене çĕнĕрен валеçессишĕн пыракан империализмлă вăрçăсем сике-сике тухаççĕ.

Ленинăн çак кĕнеки тĕнчери рабочи класăн калама çук пысăк вырăн йышăнса тăнă, халĕ те йышăнса тăрать.

* * *

Çак кĕнеке нумай пулмасть чăвашла пичетленсе тухрĕ*). Паллах, ăна куçарас тĕлĕпне нумай тата питĕ тăрăшса ĕçлемелле пулнă. Анчах куçаракансем çак задачăна кирлĕ пек пурнăçа кĕртеймен вара.

Тĕслĕхсем илсе пăхар.

Умĕмахăн улттăмĕш сыпăкне Ленин «Особенное внимание уделено в настоящей книжке критике «каутскианства», международного идейного течения...» тесе пуçлать. Чăвашла куçарнинче çапла вулатпăр: «Çак кĕнекере «каутскианствăна», пĕтĕм тĕнчипе сарăлнă идейăллă юхăма критиклесси ытла та пысăк выраи йышăнса (эпир паллă тунă — П. Д.) тăрать...» Ку предложенире Ленин «каутскианствăна» критиклесси çине ытларах çавăрăнса пăхни çинчен калать, куçаракансем вара вăл шухăша пачах урăхла туса хунă, Ленин шухăшне пăсса куçарнă.

Чăвашла куçарнă кĕнекен 14-мĕш страницинче: «Экономистсем, монополин пĕр-пĕр уйрăмлăхĕсем çинчен куписа-купипе кĕнекесем çырса, «марксизма ӳпĕнтерсе пăрахнă» ĕнтĕ тесе пĕр харăс пĕлтереççĕ» тенĕ вырăн тĕл пулать. Вырăсла ку предложени çапла: «экономисты пишут горы книг, описывая отдельные проявления монополии и продолжая хором заявлять, что «марксизм опровергнут» (Ленин. Собр соч., т. XIX, 84 стр.). Ленин «монополин уйрăм палăрĕмĕсем» çинчен çырать, куçаракансем вара «уйрăмлăхсем» çинчен калаçаççĕ. Вăл предложенине чăвашла ака мĕнле куçармалла пулнă: «Монополин уйрăм палăрăмĕсене кăтартса, «марксизма ӳпĕнтерсе пăрахнă ĕнтĕ» тесе пĕр харăс пĕлтерсе, экономистсем купи-купипе кĕнекесем çыраççĕ».

Ленин кĕнекинче çакăн пек вырăн пур: «Одно из этих заведений, в Бруклине, занимает в среднем 300 рабочих, здесь производятся опыты над изобретениями для производства (эпир паллă тунă — П. Д.) папирос, маленьких сигар...; здесь же усовершенствуются изобретения» (çавăнтах, 88 стр.). Ана чăвашла çапла куçарнă: «Çавăн пек заведенисенчен пĕринче, Бруклинра, вăтамран 300 рабочи ĕçлеççĕ, унта папирос, пĕчĕк сигарсем... тăваççĕ; куçаракансем çак задачăна кирлĕ пек пурнăçа кĕртеймен вара.

Тĕслĕхсем илсе пăхар.

Умĕмахăн улттăмĕш сыпăкне Ленин «Особенное внимание уделено в настоящей книжке критике «каутскианства», международного идейного течения...» тесе пуçлать. Чăвашла куçарнинче çапла вулатпăр: «Çак кĕнекере «каутскианствăна», пĕтĕм тĕнчипе сарăлнă идейăллă юхăма критиклесси çĕршывсенче революциллĕ кризис çибĕчленсе пырать.

Империализм условийĕнче капитализмăн экономикăллă тата политикăллă аталанăвĕ пĕртан мар пулса пырать. Капитализмăн хирĕçĕвĕсем çивĕчленсе çитеççĕ. Вара тĕнчене çĕнĕрен валеçессишĕн пыракан империализмлă вăрçăсем сике-сике тухаççĕ.

Ленинăн çак кĕнеки тĕнчери рабочи класăн калама çук пысăк вырăн йышăнса тăнă, халĕ те йышăнса тăрать.

* * *

Çак кĕнеке нумай пулмасть чăвашла пичетленсе тухрĕ*). Паллах, ăна куçарас тĕлĕшпе нумай тата питĕ тăрăшса ĕçлемелле пулнă. Анчах куçаракансем çак задачăна кирлĕ пек пурнăçа кĕртеймен вара.

Тĕслĕхсем илсе пăхар.

Умĕмахăн улттăмĕш сыпăкне Ленин «Особенное внимание уделено в настоящей книжке критике «каутскианства», международного идейного течения...» тесе пуçлать. Чăвашла куçарнинче çапла вулатпăр: «Çак кĕнекере «каутскианствăна», пĕтĕм тĕнчипе сарăлнă идейăллă юхăма критиклесси

*) **В. И. ЛЕНИН. «Империализм — капитализмăн чи çӳлти сыпăкĕ».** Чăвашгосиздат, 1940 ç. Куçараканĕ **П. Золотов.** Куçарнине **Н. Колюшкин** редакциленĕ.

* * *

Кĕнекене куçарнă чух тунă йăнăшсемпе тĕрĕс мар вырăнсене татах та илсе кăтартма пулать. Вĕсем нумай. Анчах кунта çырнинчен те ĕнтĕ çак кĕнекене начар куçарса кăларни ӳççăнах курăнать.

Ку кĕнеке «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» чăвашла пичетлесе кăларнă хыççăн çулталăк çурăран тухрĕ. Анчах çапах та кĕнекери терминсене мĕнле май килнĕ, çавăн пек куçарса янă. «Кĕске курс» кăларнă чухне туяннă опытпа усă курман.

Вăл çакăнтан лайăх курăнать: кĕнекен малти пайĕнче «горстки государств» тенине «ывçă(?) государствăсене» тесе куçарнă (9 стр.), кĕнекен варринче çитсен вара «горстка монополистов» тенине «монополистсен пĕчĕк çеç ушкăнĕ» тенĕ; «эпоха» сăмаха пĕр çĕрте — «самана», тепĕр çĕрте — «тапăр» тесе куçарнă; «сращивание» сăмаха «сыпăçса ларни», «пĕтĕçни», «пĕрлешни» тенĕ.

«Есхĕл» сăмаха вара савăл çапса лартнă пекех кĕрте-кĕрте лартнă, ку сăмах — «деятельность», «действия», «функционирующий» сăмахсен вырăнне йышăннă. «Соотношение» сăмаха «лару-тăру» (46 стр.) тенĕ, ку ĕнтĕ пачах вырăнлă мар, мĕншĕн тесен кунта «шайлашу» сăмах каймалла пулнă. «Государство» сăмаха кĕнекен нумай пайĕнче çаплипех хăварнă, анчах «патшалăх» тесе куçарнисем те тĕл пулаççĕ. «Неравномерность» нумай çĕрте «танмарлăх» е «пĕртанмарлăх» тенипе кайнă, ăна пур çĕрте те пĕр пек çырмалла пулнă. «Характерно» — «асăрхаттармалла» пулса тăнă (54 стр.).

Кавычкăсене кирлĕ вырăна лартман пирки цитатăсемпе Ленин хăй çырнисем хутшăнса кайнă вырăнсем те кĕнекере пур. Препинани знакĕсене тĕрĕс лартман вырăнсем, корректура йăнăшĕсем те чылай.

Вырăсла текстри çăмăл вырăнсенех чăвашла питех те яка мар куçарнă. Ыйтăр предложенисене куçарнă çĕрте вара пăтраштарнисем те пур. Çавăнпа та кĕнекен чĕлхи йывăр теме тивет. Çапла ĕнтĕ куçаракан, унтан та ытлах редактор, çак кĕнекене к ре ответлăха туйман.

П. ДУБ[illegible]

ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХСЕН ЙЫШНЕ ӲСТЕРЕССИШĔН

ВКП(б) XVIII съезчĕ пирĕн çĕршыв умне пысăк задача лартрĕ — вылăх-чĕрлĕхсен хисепне йышлăн ӳстермелле, вĕсенчен ытларах продукци илмелле, урăхла каласан, вылăх-чĕрлĕх проблемине татса памалла.

Парти, совет организацисем тата республикăри колхозсем ВКП(б) Центральный Комитечĕн историллĕ решенине пурнăçа кĕртсе пынă май, колхозсенче вылăх-чĕрлĕх фермисем организацилес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттерчĕç. 1939 çулпа танлаштарсан республикăра фермăсен хисепĕ чылаях ӳсрĕ.

Республикăра нумай колхозсем вылăхсене кăтартуллă пăхса усраççĕ, вылăхсен хисепне ӳстерес çĕрте çамрăк вылăхсене йĕркеллĕ пăхса çитĕнтересси пысăк вырăн йышăнса тăнине ăнланса илнĕ колхозсем те сахал мар. Çавах та пирĕн пур колхозсем те партипе правительство «Колхозсенче обществăллă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатмалли мероприятисем çинчен» йышăннă постановленине ăнăçлăн пурнăçласçĕ тесе шутлани йăнăш пулнă пулĕччĕ. Пирĕн республикăра вылăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли план çителĕксĕр пурнăçланса пырать.

Етĕрне районĕнчи колхозсенче партипе правительствăн решенийĕ тухнăранпа, 1940 çулти декабрĕн 1-мĕшне 20 сĕт-çу ферми, сурăх ферми 26 организациленĕ. Çавах та сурăхсен хисепĕ районра хутшăнман, ĕнесен хисепĕ малтанхинчен 39 пуç чакнă.

Декабрĕн 15-мĕшне Етĕрне районĕ вылăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана — майракаллă шултра вылăхсем тăрăх 78,5 процент, сыснасем енĕпе 75,8 процент, сурăхсем енĕпе 84,6 процент тата кайăк-кĕшĕксем енĕпе плана 51 процент анчах тултарнă. Плансене тултарасси япăх пырать пулсан та фермăсем валли вылăхсем туянас ĕçе кирлĕ пек организацилемен. Колхозсем вылăхсене базарти хакпа е тырăпа илеççĕ, çапла обществăллă фондсене салатаççĕ. «Восток» колхоз 4 ĕне туянас вырăнне базар хакĕпе пĕр пăру илнĕ те вылăхсем туянма уйăрнă фонд пĕтнĕ.

Хăшпĕр колхозсенче вылăхсене зоотехника кăтартнă пек пăхман пирки çамрăк вылăхсем вилни те пулкалать. «Красный маяк» колхозра сысна çурисенчен çуррине яхăн вилнĕ. Районра вылăх витисене юсаса çитермен колхозсем те чылай-ха. 10 колхозра пăру витисем çук. ВКП(б) XVII съезчĕ ячĕпе тăракан колхозра 40 ĕне пăруламалла, анчах 17 пăру усрама кăна вите хатĕрленĕ. «Красный маяк» колхозра витесем çук пирки сыснасене тата кайăк-кĕшĕксене колхозниксен килĕсенче усраççĕ.

Етĕрне районĕнчи колхозсенче вылăхсене тăрантарас ĕçе кирлĕ пек йĕркелемен. Киров ячĕпе тăракан колхозра лайăх апата колхозниксене валеçсе панă, начаррине фермăри вылăхсем валли хăварнă.

Обществăллă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç Вăрмар районĕнче те аван пулса пырать теме çук. Государствăн вылăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планне майракаллă шултра вылăхсем енĕпе 81,2 процент, сыснасем енĕпе 54,8 процент çеç тултарнă. Первомайский районра кăçал çамрăк вылăхсем йышлăн вилни палăрать.

Çак районсенче тума пуçланă витесене туса, киввисене юсаса пĕтермен. Колхозсем вылăхсене колхозниксенчен контрактаци йĕркипе мар, юнашар колхозсенчен туянаççĕ. Çавна май районсенче обществăллă вылăхсен хисепĕ хутшăнса пыни палăрмасть.

Октябрьский районра 75 сĕт-çу ферми, çав фермăсенче 1488 пуç ĕне шутланать. Планпа 1800 пуç пулмалла. Район нихăçан вылăх енĕпе те плана тултарман. Районра малта пыракан колхозсем те, сăмахран, Емĕрт Туçа колхозĕ, чăх-чĕпсем ĕрчетмелли плана 54 процент çеç тултарнă. Ытларах колхозсенче фермăсем валли вылăхсем туянмалли плана çурри ытларах кăна тултарнă. Хăшпĕр колхозсенче фермăсенче ама вылăхсем пачах çук.

Уйăрăм колхозсенче вылăхсене, уйрăмах çамрăк вылăхсене начар пăхаççĕ. Мĕшĕл колхозĕнче сурăхсемпе сыснасем, ĕнесемпе пăрусем пĕр витере пурăнаççĕ. Бичурино колхозĕнчи вите сыснасене усрама юрăхсăр. Кантăксем çĕмĕрелсе пĕтнĕ, стенасем шăтăк.

Октябрьский районра кайăк-кĕшĕксем ĕрчетесси уйрăмăнах начар пырать. 6 колхозра кайăк-кĕшĕк ферми пачах çук. Сятракасси колхозĕн ферминче план тăрăх 400 чăх-чĕп пулмалла пулсан, 45 чăх кăна. Опнер колхозĕнчи чăх-чĕп ферминче мĕнпурĕ те 19 чăх çеç. Çав вăхăтрах колхоз председателĕ Степанов хăйĕн хуçалăхĕнче 40 чăх усрать.

Чылай колхозсенче иртнĕ çулхи йăнăшсене шута илмеççĕ. Бичурино, Шанар колхозĕсем вылăхсем валли апат сахал хатĕрленĕ.

Çакăн пек тĕслĕхсем Йĕпреç, Шупашкар тата ытти районсенче те пур Çак фактсем чылай районсенче парти, совет организацисем тата колхозсем ВКП(б) Чăваш Обкомĕн IV пленумĕн решенийĕсенчен кирлĕ вывод туманнине кăтартса параççĕ.

Çӳлте асăннă районсенче ВКП(б) райкомĕсем, райсовет исполкомĕсем вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ыйтупа ĕçлемеççĕ, тесе калама çук. Октябрьский тата ытти райкомсем сахал мар решенисем йышăннă. Кашничех çитменлĕхсене палăртнă, райĕрĕç пайĕсене, райсовет исполкомĕсене тата колхозсене сĕнӳсем панă, колхозсене уполномоченнăйсем те сахал мар янă. Анчах, решенисене тата поручинисене мĕнле пурнăçланине контроль туса пыман пирки вĕсем хут çинчех юлаççĕ. Сăмахран, ВКП(б) Етĕрне райкомĕ кăçал хăйĕн бюро ларăвĕнче вылăх-чĕрлĕх ĕрчетесси çинчен пиллĕк хут сӳтсе-явнă. Кашни ларурах решенисем йышăннă. Анчах çав решенисене вырăнсене мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине сахал тĕрĕсленĕ.

Вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри кадрсемпе ĕçлесси, вĕсене вĕрентсе, çитĕнтерсе пырасси ку вăхăтченех çителĕксĕр пулса пырать-ха. Етĕрне районĕнчи 53 ферма заведующисенчен 43 çын пĕр султан та каярах ĕçлеççĕ. Çапла уйрăм районсенче кадрсем час-часах улшăнса тăраççĕ.

Обществăллă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатас, вĕсенчен ытларах продукци илес тата вылăхсене ăнăçлăн хĕл каçарас тесен асăннă çитменлĕхсене халех пĕтерес пулать. Тума пуçланă витесене халех туса пĕтермелле, киввисене юсаса ăшăтмалла. Çавнашкалах фермăсем валли вылăхсем туянса çитермелле. Çавна май колхозниксенчен контрактаци йĕркипе çамрăк вылăхсем туянассине организацилемелле.

НИПЕН.

Çĕнĕ шкул çурчĕ

КАНАШ. Вăтакас-Татмăш ялсоветне кĕрекен Анаткас-Татмăшра ку тариччен шкул çурчĕ пулман. Классем уйрăм хваттерсенче пулнă. Ялсоветĕ самообложени укçипе çĕнĕ шкул çурчĕ туса лартрĕ. Шкул çутă та илемлĕ.

Т. Турхан.

Рабочисен паха сĕнĕвĕсене вăхăтра пурнăçа кĕртни кирлĕ

ВĂРМАР. «Спортинвентарь» фабрикинчи стахановецсем тата инженерсемпе техниксем техникăна кулленех вĕренсе пыраççĕ. Вĕсем кулленхи ĕç нормисене ытлашшипех тултараççĕ. Техникăна тĕплĕн вĕренсе пынипе пĕрлех ĕç тухăçлăхне ӳстермелли майсене те вĕренсе пыраççĕ. Рабочисен сĕнĕвĕсене пурнăçа кĕртсе фабрикăра нумай машинăсене тата станоксене урăхлатса çĕнетнĕ, продукци пахалăхне те лайăхлатнă. Кунта ĕçленĕ вăхăтра инкек-синкекрен сыхланассине лайăхлатас тĕлĕшпе панă сĕнӳсем те пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Çапах та рабочисен сĕнĕвĕсем пысăк пулăшу параççĕ пулин те, çак ĕçе кирлĕ пек ертсе пыни çук-ха. Рационализацине изобретенилле сĕнӳсене нумай вăхăт хушши пăхмасăр вырттарнисем те пулнă. Çавăн пекех, вăл сĕнӳсене хăшне-пĕрне пăхса тухса ырланă пулсан та ĕçе кĕртмен. Рационализаци ĕçĕ çине çавăн пек пăхнă пирки рабочисен сĕнĕвĕсене дирекцине пĕлтермесĕрех ирттерсе яраççĕ.

Фабрикăра рабочисен сĕнĕвĕсене тĕплĕн шута илни çук. Рабочисем шухăшласа кăларнă тăрăх машинăсемпе станоксене тата туса кăларакан продукцисене сахал мар урăхлатса çĕнетнĕ. Анчах вĕсенчен нумайĕшне усă курмасăрах хăварнă.

Рабочисен сĕнĕвĕсене тĕплĕн шута илмен. Ĕçре усă курма юрăхлă пулсан та вĕсем экономи сахал параççĕ, çавăнпа шута илмен энир, теççĕ фабрикăри руководительсем.

Фабрикăри партипе комсомол организацисем, фабком тата дирекци те рабочисем паракан паха сĕнӳсене пурнăçа кĕртес енĕпе ытла та сахал ĕçлеççĕ. 1940 çулта пурĕ те 17 сĕнӳ ĕç шутланать. Вĕсенчен чылайĕшне пурнăçа кĕртнĕ пулин те, усăллă сĕнӳсемех ĕçе кĕмесĕр юлнă.

Николай Дидерихсен çыру сĕтелĕн тумбочкисене тума кирлĕ хăшпĕр хатĕрсене алăпа ĕçлес вырăнне машинăпа усă курасси çинчен сĕнӳ панă. Çак сĕнӳ усăллă пулнă, ăна дирекци те ырланă. Сĕнĕве панăранпа нумай вăхăт иртнĕ, фабрикăра халĕ те унпа усă курма пуçăнман.

Дидерихсен сĕнĕвĕ çулталăкра 1.166 тенкĕ усă парать. Рабочисемшĕн те машинăпа ĕçлени çăмăлрах, продукци кăларасси те ӳсме пултарать. Анчах темшĕн вăл сĕнĕве пурнăçа кĕртмеççĕ.

Фабрика директорĕн обязанноçĕсене туса пыраканĕ Николаев, цехра ĕçленĕ чухне хăй те производствăна усă кӳрекен нумай сĕнӳсем панă. Вĕсемпе те усă курма тытăнман.

Рабочисен сĕнĕвĕсем çине чунсăр пăхни пулмалла мар. Рабочисен паха сĕнĕвĕсене вăхăтра пăхса тухса вĕсене вăхăтра пурнăçа кĕртни производствăна пысăк усă кӳме пултарать.

П. ПАВЛОВ.

Тихасене шефа илнĕ

СĔНТĔРВАРРИ. Чăрăшкассинчи пуçламăш шкулта вĕренекен пионерсем, отличниксем «Социализм» колхозăн çамрăк тихисене шефа илнĕ. Вĕсем 3 пин пăхса çитĕнтерме пулнă.

Пионерсем тихасене зоотехник кăтартнă тăрăх пăхаççĕ: вăхăтра апат параççĕ, шăвараççĕ тата уçăлтарса çӳретеççĕ. Тихасене пăхма колхоз правлени те пулăшса пырать. Пионерсен ĕçĕсене колхозри конюх Алексеев юлташ тĕрĕслесе тăрать.

Иванов тата Колесников пионерсем тихасене тăрăшса пăхаççĕ. Вĕсем Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕсем пулма ĕмĕтленеççĕ.

В. Захаров.

Укерчĕк çинче: çĕр çулхи старик (долган нацинчен) хăйĕн çемьипе пĕрле Пясина юханшывĕ хĕрринче. А. Погосов фото-этючĕ (ТАСС).

Пĕр колхозри кахалсем

Пояндайкинĕри «Новая жизнь» колхоз членĕсем çитес кунсенче ĕçкунĕсем тăрăх тырпул илеççĕ. Халĕ ĕнтĕ колхоз производствинче кам мĕнле ĕçлени палăрать.

Анна Макарова колхозра мĕнле хастарлăн ĕçленине пурте пĕлеççĕ. Вăл нимĕнле ĕçе те тиркемест. Ахальтен мар ĕнтĕ вăл кăçал 11 уйăх хушшинче 192 ĕçкунĕ тунă. Кунсăр пуçне çемьене ĕçлеме пултаракансем тата 2 çын пур. Пĕтĕмпе Макарова çемьи 11 уйăх хушшинче 952 ĕçкунĕ тунă, декабрьти ĕçсене шутласан 1000 ĕçкунĕнчен те иртет.

Николай Узяков çемьи те колхоз производствинче хастарлăн ĕçлет. Вĕсен çемьинче ĕçлеме пултаракансем 3 çеç, вĕсем кăçал 1400 ĕçкунне яхăн тунă. 65 çулхи Матрена Анисимова пĕччен 145 ĕçкунĕ тунă. Кун пек стахановла тĕслĕхсем кăтартса ĕçлекенсем колхозра тата та пур. Вĕсем сахал мар тырпул илеççĕ.

— Маттур ĕçлеççĕ. Пурте вĕсем пек ĕçлесен пирĕн колхоз тырпул тухăçне хăвăрттăн ӳстерсе пымалла. Анчах колхозра ĕç çине çиелтен пăхаканнисем пур, вĕсем пире хытă чăрмантараççĕ,— теççĕ колхозниксем.

Тĕрĕс каласçĕ. Колхозра лодырьсем пур. Вĕсем ĕçре чылай чăрмав тăвасçĕ. Çуллахи вăхăтра, хĕрсе ĕç пынă чух, вĕсем тĕрлĕ сăлтавсем тупса ĕçлеме тухмарĕç. Хăвăсем шăрăх çинталăкра «хул-çурăма çĕмĕрес мар» тесе, теприсем ытларах укçа тупас тесе прĕке ĕçлеме кайрĕç.

Анна Пастуховăна пурте пĕлеççĕ. Вăл çăва тухсанах Çĕмĕрлене ĕçлеме кайрĕ, ялхуçалăх ĕçне вĕçлесен — ноябрь уйăхĕнче колхоза таврăнчĕ. Халĕ упăшки ĕçленипе пурăнать.

Акă тата Евдокия Семеновăна илер. Вăл ĕнтĕ çамрăк, çирĕп сывлăхлă, 20 çулта. Иртнĕ çуркунне Карело-Финн республикине кайрĕ. Вăхăт нумаях та иртмерĕ, август уйăхĕнче каллех колхоза таврăнчĕ. Пĕр уйăха яхăн фермăра ĕçлерĕ те, ĕçе çиелтен тунăшăн, унтан та кăларчĕç.

Мария Базикова та çакăн пекех. Колхозниксем хĕрсе ĕçленĕ вăхăтра вăл чугунçул станци хĕрринче япала-сем сутса пурăнчĕ. Каярахпа колхоза килсе яслĕне ĕçлеме кĕнĕ, кăшт ĕçлесенех кунтан кăларнă.

Çак кахалсем нихăçан те çулталăк хушшинче 60 ĕçкунĕнчен ытла тăвайман. Анна Пастухова пĕр ĕçкунĕ те туман, М. Базикова 29 ĕçкунĕ, Т. Миронова — 28, Е. Егорова — 49, А. Миронова—15, А. Машанова—18, Ф. Афанасьева 63 ĕçкунĕ çеç тунă.

Тӳрĕ ĕçлеме колхозниксем кахалсене кураймаççĕ, вĕсене сивлеççĕ, колхозран кăларма ыйтаççĕ.

— Хут çинче çеç шутланакан колхозниксем пире кирлĕ мар. Вĕсем пирĕн колхоза малалла кайма чăрмантараççĕ, колхозник ятне вараласçĕ, — теççĕ колхозниксем.

Иван Трифонов çăва тухсанах Çĕмĕрлери столовăйсем тăрăх çӳрерĕ. Ăна чылай çĕре ĕçлеме кĕме чĕннĕ. Анчах кахалăн ниçта та ĕçлес килмест. Çапла вара ноябрь уйăхченех унта-кунта çӳрекелерĕ. Халĕ юсанмалли çурта хупнă.

— Вăл иртнĕ çулта вербовка йĕркине ĕçлеме кайнăччĕ. Кăçал унтан тарса килчĕ. Çăвăншăн ăна тĕрмене хупнă, —теççĕ колхозри стахановецсем.— Ку вара питех те лайăх, малалла ĕнтĕ вăл совет гражданинĕн епле пулмаллине пĕлĕ.

«Новая жизнь» колхоз кăçал та ялхуçалăх ĕçĕне юлса пырать. План тăрăх уйăри тырпула 28 кун хушшинче пухса кĕмелле пулнă, ĕç вăйĕ çитмен пирки 50 кун ытла иртсен çеç пĕтернĕ, авăн çапас тĕлĕшпе те кая юлнă. Çавна пула колхоз паянхи куна государствăна тырă, техниккаллă культурăсем, укçа-тенкĕ, пахча-çимĕçсем те парса татман, вăрман хатĕрлевĕнче çителĕксĕр ĕçлет. Паллах, пур колхозник та тӳрĕ, тăрăшса ĕçленĕ пулсан колхоз хăйĕн ĕçне чылай лайăхлатма пултарнă пулĕччĕ.

Кахал-наянсем малалла та çаплах «ĕçлеме» шутлăç-ши? Çук, совет законĕ ĕçлемесĕрех колхозник ячĕпе витĕнсе пурăнма хушмасть.

ХАР. ЛИСИН.

Çĕмĕрле районĕ.

Измаил облаçĕнчи курортсем

ИЗМАИЛ. Дунай тата Днестр шывĕсем хушшинче, Хура тинĕс хĕрринче, сĕнĕ курортсем тăваççĕ. Сергеевкăра, Бугасра тата ытти пунктсенче сакăр санатори тăваççĕ, вĕсенче 1.500 койка пулмалла. Çулла кунта 10 пин çын ытла канмалла.

Илемлетсе кăларакан почта открыткисем

МУСКАВ. Çыхăну Халăх Комиссариачĕ çитес вăхăтра адрес çырмалли енне тĕрлĕ майпа илемлетнĕ почта открыткисем кăларма тытăнать. Вăл открыткăсене совет архитектури, оборона, физкультура тата ытти темăсем тăрăх серисемпе кăлараççĕ.

Кам ĕçе сыпса тухать эрех, Вăл прогульщикпа пĕрех

Нил Захарыч, тĕп бухгалтер,
Лайăх хырăннă, таса.
Çӳремест вăл хăлтăр-халтăр
Ĕçкĕ тăрăх янраса.

Пĕр-пĕр пьянцă тĕлпулсассăн
Йĕрĕнсе, сурса иртет.
—Ямшăк евĕр ӳсĕр,—тет.
Малалла утать мăнаçлăн.

Нил Захарыч ямшăк мар.
Пурнăç ун тӳп-тӳр графаллă.
Пур çĕрте те виçнĕ, палла;
Юратмасть вăл йăнăшма.

Темле пысăк ĕç пулсан та
Ытлашши лармасть çĕрле.
Ирпе радио хускалтăр,—
Тăрать музыкпа пĕрле.

Ир тăрать те хăйне майĕн
Тытăнать «зарядкăна».
Тикĕс каснă усси айĕн
Стопка вĕлт çеç ыткăнать.

Ма кулатăр? Чун уçмаллăх
Питĕ меллĕ япала.
Апат хатĕр. Çимĕç лайăх.
Тепрер стопка ямалла.

Халĕ ак чипер бухгалтер
Ĕçелле кайма та хатĕр.
Кулленхи йĕр-графапа
Вăхăта çитет шăпах.

Кунта шут умне ларсассăн
Ĕç пуçланнă сехетре
Шăрçасем сикеç хавассăн,
Цифрăсем ташлаç хитрен.

Кăмăл ырă акăш-макăш...
Анчах тепĕр сехетрен
Пуçланать тăрлавсăр кахрăм
Туп-тулли пĕсехерен.

Шăрçасем кичемленеççĕ,
Цифрăсем тĕксĕмленеççĕ.
Çакна сиснĕн янкăрах
Илтĕнет ав шăнкăрав.

Ку вăл çур кăнтăр апачĕ,
Пурте буфета тапаççĕ.
Нил Захарыч хăйĕнех—
Утрĕ «шăнкăрч йăвине».

(Юптарса çапла ят панă
Пĕр кĕтес пур тĕнчере).
Нил Захарыч пит васкавлăн
Кунта стопка тӳнтерет.

Нил Захарыч ӳсĕр мар,
Çук вăрçма е хăтăрма.

Кунăн иккĕмĕш çур панĕ.
Ларалла халь касченех.
Нил Захарыч сăмах майĕн
Пăхкалать сехет çине.

* * *

Кунĕпе çакна сăнарăм,
Анчах путлĕ ĕç курмарăм,
Унтан тăтăм, чăтаймарăм,
Сăмах петĕм эп тӳрех:
—Кам çапла ĕçе ирех
Пехлесе килет эрех,
Вăл прогульщикпа пĕрех!

АРКАДИЙ ЭСХЕЛЬ.

Пĕтĕм Хĕрлĕ Çарти йĕлтĕрлĕ кроса хатĕрленни

Пĕтĕм Хĕрлĕ Çарăн С. К. Тимошенко ячĕпе пулса иртекен йĕлтĕрлĕ кросне хатĕрленнĕ май, Бекмурзаев ертсе пыракан часть (Çĕпĕр çар округĕ) 500 километра яхăн йĕлтĕрлĕ поход туса ирттернĕ.Округри гарнизонсенчен пĕри 2.000 километрлă йĕлтĕр эстафетине хатĕрленет. Халĕ чи лайăх мастер-йĕлтĕрçĕсене инструкцисем парасси пырать. Кайран вĕсем хăйсен спортлă пуян опычĕсене ытти боецсене параççĕ.

Социальнăй страховани ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерер

Совет влаçĕ пулнă хыççăн пирĕн Чăваш республикинчи ĕççыннисем, совет çĕршывĕнчи пĕтĕм ĕççыннисемпе пĕрле, телейлĕ те савăнăçлă пурнăç çулĕ çине тухрĕç. 1917 çулччен республика территорийĕнче пĕртен-пĕр санатори — Чуварлейри санатори пулнă. Анчах та кунта кулаксем, помещиксем, попсем çеç ырă курса пурăннă. Чирлĕ рабочисем кунта килсе сывалма пултарайман. Хальхи вăхăтра пирĕн республикăра канмалли çуртсем 3 пур. Канмалли çуртсенче рабочисем, служащисем, колхозниксем кашни çулах нумай канаççĕ. Чуварлейри санаторине тĕпренех çĕнетсе лайăхлатнă. Кусемсĕр пуçне республикăра ялан ĕçлекен пионер лагерĕсем 3, ача санаторийĕсем 2 пур. Çĕршер ача яслисем, ача сачĕсем, клубсем, хĕрлĕ кĕтессем ĕçлеççĕ.

Коммунистсен партийĕпе совет правительстви ĕççыннисен, пурнăçне лайăхлатассишĕн пĕтĕм вăйран тăрăшаççĕ. Совет влаçĕ пулнă хыççăн пирĕн республикăра — Шупашкарта трахом институчĕ, районсемпе хуласенче куç чирĕнчен сыватакан больницăсем, Улатăр, Канаш, Çĕрпӳ, Шупашкар хулисенче лайăх поликлиникăсем тата ытти тĕрлĕ чиртен сыватакан больницăсем нумай уçнă. Республикăра больницăсем 54, фельдшер пункчĕсем 142, трахом пункчĕсем 685, акушер пункчĕсем 75 пур т. ыт. те. Хуласенче ĕçлекен врачсен шучĕ, 1913 çултипе танлаштарсан, 25 хут тата ялсенче 6 хут ӳснĕ. Медицина ĕçĕнчи вăтам работниксен шучĕ хуласенче 28 хут, ялсенче 29 хут ӳснĕ. Партипе совет правительстви рабочисемпе служащисен сывлăхне çирĕплетме çулсеренех çĕршер пин тенкĕ укçа уйăрса параççĕ. Сăмахран, 1937 çулта, 40 тĕрлĕ профсоюз енĕпе, государствăн социальнăй страховани укçинчен рабочисемпе служащисене курортсенче пулса чир-чĕртен сывалма 379.415 тенкĕ, канмалли çуртсене каймалли путевкăсем илме 546.812 тенкĕ уйăрса панă. Совет правительстви, коммунистла парти тата халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ ачасемшĕн — коммунистла обществăн пулас строителĕсемшĕн уйрăмах хытă тăрăшаççĕ.

1940 çулта социальнăй страховани валли 1937 çулхинчен чылай нумай — 11.770.178 тенкĕ уйăрса панă. Вăл укçасемпе рабочисене, служащисене курортсемпе канмалли çуртсене янă. Пионер лагерĕсен енĕпе 367.750 тенкĕ расходланă. Пĕлтĕр курортсемпе санаторисенче 1.036 çын пулнă, канмалли çуртсенче 4.157 çын, пионер лагерĕсенче 1.121 ача каннă.

Çаксене эпир пĕр 40 тĕрлĕ профсоюз енĕпе кăна илсе кăтартрăмăр. Ытти 12 тĕрлĕ профсоюз тата наркоматсемпе хуçалăх организацийĕсем хăйсем тĕллĕн путевкăсем илнине шута илсен, ĕççыннисен сывлăхне управама укçа-тенкĕ расходланă хисеп татах та нумай ӳсет.

Партипе Совет правительстви социальнăй страховани ĕçне тĕрĕслесе тăрассине профсоюзсене шанса панă. Çак питĕ ответлă тата хисеплĕ задачăна профсоюзсен тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пыни кирлĕ. Государство социальнăй страховани тĕлĕшпе паракан укçана тĕрĕс расходламалла. Çак тĕлĕшпе Чăваш республикинчи профсоюз организацийĕсем сахал мар ӳсĕм турĕç. Профсоюз организацисен руководителĕсем больничнăй листсем мĕнле панине тĕрĕслесе тата социальнăй страховани валли укçа уйăрса панине сăнаса тăраççĕ.

ВЦСПС X пленумĕ хыççăн профсоюз организацийĕсем актива ĕçе анлăн хутшăнтарма тытăнчĕç. Актив профсоюз обкомĕсем паракан ĕçсене пысăк кăмăлпа туса пырать. Государство учрежденийĕсенчи работниксен профсоюзĕн обкомĕ страховани ĕçĕнче актив пулăшнипе пысăк ӳсĕм турĕ. Иртнĕ çулта Çĕмĕрле районĕнчи 20 ялсовет социальнăй страховани валли укçа вăхăтра куçарса тăман. Профсоюз обкомĕ штатра тăман инспектора Тайкин юлташа çак çитменлĕхе пĕтерме сĕнчĕ. Тайкин юлташ хăйне шанса панă ĕçе лайăх пурнăçа кĕртрĕ. Малтанхи вăхăтра юлса пынă ялсовет исполкомĕсем социальнăй страховани укçине пĕтĕмпех куçарса панă.

Профсоюз активĕ социальнăй страховани укçипе тĕрĕс усă курнине сăнаса тăрать, ĕç дисциплинине пăсакансене хирĕç кĕрешет. Халăххуçалăх учечĕн Чăваш республикинчи управлени работникĕ пулнă Фролов 1940 çулти январь уйăхĕнче ӳсĕр пулса çапăçса аманса пĕтнĕ. Пĕр эрне хушши ĕçе тухман вăл. Çитменнине тата ултавлă майпа больничнăй лист илме ĕлкĕрнĕ. Страховой делегат Морозова юлташ Фролов панă больничнăй листа тĕрĕсленĕ хыççăн, ăна укçа тӳлеме кирлĕ марри çинчен профсоюз комитетне пĕлтернĕ. Профсоюз комитечĕпе администраци страховани делегачĕ панă сĕнӳсемпе килĕшнĕ, Фролова ответ тыттарнă, ĕçрен кăларнă.

Чăваш АССР Социальнăй обеспечени Халăх Комиссариатĕнче сукăрсен обществи заведующийĕ пулса нумай вăхăт хушши Быков ĕçленĕ. Вăл хăйĕн инструкторĕпе Ивановпа пĕрле пысăк растрата тунă. Администраци ыйтнипе çак ĕçе судпа следстви органĕсем тĕрĕслеме тытăннă. Быков ответ тытасран хăтăлас шутпа, хăйне сывмар шутласа, врачсене улталаса больничнăй лист илнĕ. «Апендицит» тесе çырнă больничнăй листпа Быков 32 кун хушши ĕçлемесĕр пурăннă. Страховой делегат Здорнов юлташ çак ĕçпе интересленнĕ, врача чĕнсе илсе Быков сывлăхне тĕрĕслеттернĕ. Кун хыççăн Быков улталаса пурăнни уçăнах курăннă.

Кун пек тĕслĕхсене темĕн чухлех илсе кăтартма пулать. Государство учрежденийĕсенчи работниксен профсоюзĕн обкомĕ страховой делегатсемпе штатра тăман инструкторсем пулăшса пынипе 1940 çулти социальнăй страховани планне ноябрĕн 1-мĕшне 160 процент тултарчĕ.

Çапах та, пур профсоюз организацисем те государствăн социальнăй страхованийĕ тĕлĕшпе çителĕклĕ ĕçлеççе теме çук-ха. Ку тĕлĕшпе йĕркене пăснисем те пулкалаççĕ. Медицинăна санитари работникĕсен союзĕн обкомĕ больничнăй лист панă чухне закона пăхăнман сывлăха сыхлав организацисемпе паян кунччен те килĕшсе пурăнать, больничнăй листсем парас ĕçе кăтартуллă организацилеме тăрăшмасть. Çĕмĕрле районĕнче финанспа банк ĕçĕнчи работниксен союзĕн членне Прохоровскине октябрь уйăхĕнче 5 кунлăха больничнăй лист панă. Çак хушăра вăл путевка илет те курорта туха каять. Курорта кайсан ăна больничнăй листа малалла тăсса памаççĕ. Курортран таврăннă хыççăн, Çĕмĕрле больницинчи врач Ильина, врачебно-курортнăй комиссин ларăвĕнче пăхса тухмасăрах, курортра пулнă вăхăтшăн пĕтĕмпех больничнăй лисе çырма парать.

Врачсен практикаллă ĕçĕнче йывăр çын пулнă хĕрарăмсене больничнăй листсем панă чухне те кун пек «йăнăшсем» час-часах пулкаласçĕ. Çак тĕлĕшпе Чăваш АССР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕпе медицинăпа санитари работникĕсен союзĕн обкомĕпе калаçсан йăнăшма пултарнă», тенĕ ответ илнĕ. Çĕрпӳ больницинчи врач Королева Çĕрпӳ хула Совет исполкомĕн работницине А. Григорьевăна йывăр çын пулнă вăхăтра больничнăй лист 105 кунлăха панă. Кунта, Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕпе медицинăпа санитари работникĕсен союзĕн обкомĕнчи работниксен сăмахĕпе каласан, 42 кунлăх çеç «йăнăш» тунă.

Совет медицинин работникĕсем умĕнче пысăк задача тăрать. Вĕсен ĕç дисциплинине пăсакансене, производство дезорганизаторĕсене хирĕç хаярран кĕрешмелле. Государствăна çак ĕçре пулăшса пымалла.

Совет халăхĕ СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1940 çулти июнĕн 26-мĕшĕнче кăларнă Указа тулли кăмăлпа кĕтсе илчĕ. Çак Указ вăл хамăр çĕршывăн хуçалăхла тата оборонăлла вăй-хăватне тата та çирĕплетме пулăшать. Çак Указа пурнăçа кĕртсе пынă çĕрте медицина работникĕсем палăрăн йышăнса тăраççĕ. Вĕсен симулянтсене, лодырьсене, харампырсене, государствăран ытларах илме тата ăна сахал пама ĕмĕтленекен çынсене хирĕç вăйлăн кĕрешсе пымалла.

Чăваш АССР Социальнăй обеспечени Халăх Комиссариатĕнче плановик пулса Гордеев ĕçленĕ. Унччен вăл профсоюз органĕнче те чылай ĕçленĕ пулнă. Вăл тӳрĕ кăмăлпа ĕçлеме тăрăшмасть. Кунта кĕрччен тепĕр учреждените плановик пулса ĕçленĕ. Унтан ăна прогул тунăшăн тата пĕрмаях ĕçсе çӳренĕшĕн кăларса янă. Социальнăй обеспечени Халăх Комиссариатĕнче ĕçленĕ чухне Гордеев татах та ытларах ĕçме пуçланă. Иртнĕ çулхи август уйăхĕнче пĕр кун кунĕпех ĕçе тухман. Çакăншăн ăна, совет законĕ тăрăх судпа айăпласа, 6 уйăх хушши юсанмалла ĕçлемелле тунă. Вăл кун хыççăн та ĕçме пăрахман. Ноябрĕн 10-мĕшĕнче ӳсĕр пулнипе ĕçе тухайман, прогул тунă. Вăл кун ун аллинче больничнăй лист пулман. Социальнăй обеспечени Халăх Комиссариачĕн администрацийĕ Гордеева ĕçрен кăларма тата суда панă приказ çырнă. Гордеев суд умĕнче ответ тытасран пăрăнса юлас шутпа ноябрĕн 11-мĕшĕнче Шупашкарти поликлиникăна кайса больничнăй лист илсе тухнă. Врач Никитин ноябрĕн 11-мĕшĕнче поликлиникăна пынă Гордеева ноябрĕн 10-мĕшĕнче пынă пек туса больничнăй лист çырса панă. Çапла вара врач Никитин Гордеев прогульщике хӳтлеме пăхнă.

Профсоюз организацисен социальнăй страховани укçине тĕрĕс расходланине тĕрĕслесе тăмалла. Социальнăй страхованийĕнчи пĕр пуç укçа та производство дезорганизаторĕсен аллине ан лектĕр. Вăл укçапа пĕлсе тата тĕрĕс усă курмалла. Социальнăй страховани укçинĕ ĕççыннисен сывлăхне çирĕплетес ĕçе кайтăр, ĕç тухăçлăхне ӳстерме, продукци пахалăхне лайăхлатма пулăштăр.

Пирĕн çĕршывăн малта пыракай çыннисем — стахановецсемпе ударниксем çĕнĕ обязательствăсем илсе ĕçдесе, кашни кунах ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пыраççĕ. Профсоюз организацисен çак кĕрешӳ пуçĕнче пымалла. Хăйсен ĕçне çĕнетсе лайăхлатмалла.

С. АСТАФЬЕВ.

Государство учрежденийĕсенчи работниксен союзĕн обком председателĕ.



Англипе Германи хушшинчи вăрçă. УКЕРЧЕК ÇИНЧЕ: Лондон хĕррисене вырнаçтарса лартнă хăватлă зенитнăйорудисем, вăл орудисене йĕри-тавра хăйăр тултарнă, михĕсемпе хŷтленĕ. (Фото ТАСС).

Англипе Германи хушшинчи вăрçă

БЕРЛИН, январĕн 5-мĕш. (ТАСС). Верховнăй командовани çапла пĕлтерет: ĕнер Германи авиацийĕ разведкăсем кăна тунă. Иртнĕ каçхине Германи авиацийĕн пысăк соединенийĕсем Бристоль гаванĕ пулса тăракан Эвонмут çине, çавăн пекех тата Бристоль заливĕнчи ытти объектсем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Англи авиацийĕ Германи территорийĕ çине темиçе вырăна бомбăсем пырса пăрахнă, кăштах сиен кŷнĕ. Çар объекчĕсене сиен пулман.

ЛОНДОН, январĕн 5-мĕш. (ТАСС). Çапла пĕлтерĕççĕ: ĕнер тĕттĕмленсе çитсенех Германи самолечĕсем Англи çине пуçлă хŷт пыра-пыра тапăннă. Противник самолечĕсем пуринчен ытларах Хĕвеланăç Англини пĕр хулана атакăланă. Хулара пушарсем тухнă. Халăх хушшинче вилнисемпе амаççисем пур. Çавăн пекех Кăнтăр Уэльсри тĕрлĕ пунктсене те бомбăсем пырса пăрахнă, вăл пунктсенче сиенсем те, вилнисемпе амаççисен хисепĕ те пысăк мар. Лондонра самолетсенчен сыхланма панă тревога темиçе сехете пынă, анчах Лондон çине самолетсем сахал вĕçсе пынă.

БЕРЛИН, январĕн 6-мĕш. (ТАСС). Германи çарĕн верховнăй командованийĕ çапла пĕлтерет: Германин подводнăй лодки противник парохочĕсене путарни çинчен пĕлтерет: путарнă пароходсен пĕтĕм тоннажĕ—20.600 тонна.

Ĕнер Германи самолечĕсем Кăнтăр Англини çар сооруженийĕсем çине тата Англи сыранĕ патĕнче противник суднисем çине ăнăçлăн пырса тапăннă. Саутенд сывăхĕнче бомбăсем тивнипе противник парохочĕ путнă, унăн тоннажĕ 3—4 пин тонна. Çавăн пекех противникăн хуралра тăракан 2 миноносецне тата хĕçпăшаллантарнă пĕр суднине ăнăçлăн атакăланă.

Кăнтăрла Лондон çине вут чĕртсе яракан бомбăсемпе фугаслă бомбăсем пырса пăрахнă. Кăнтăр Англини заводсемпе транспорт сооруженийĕсем çине, çавăн пекех пĕр аэродром çине бомбăсем пырса пăрахнă. Юлашки каçхине Германи авиацийĕ Лондон çине тата тепĕр хут пырса тапăннă.

Ыран январĕн 6-мĕш тенĕ чух çĕрле противник самолечĕсем Германи çине пырса тапăнман. Противникăн темиçе самолечĕ оккупациленĕ территори çине вĕçсе кĕме хăтланнă, анчах вĕсене каялла хăваласа янă. Икĕ бомбардировщикĕ Франци çыранĕ патĕнче тинĕсе ŷкнĕ. Германи авиацийĕн çухатусем пулман.

ЛОНДОН, январĕн 6-мĕш. (ТАСС). Англире çапла пĕлтерĕççĕ: ĕнер Германи авиацийĕ Лондон çине вут чĕртсе яракан бомбăсем çĕртер бомба пырса пăрахнă. Пуçланнă пушарсене сарăлса кайма паман. Нумай çуртийĕре сиен кŷнĕ. Вилнисемпе аманнисем пур. Ливерпульпа ытти хуласем çине пырса пăрахнă бомбăсем пысăк сиенех кŷмен. Вилнисемпе аманнисен хисепĕ пысăк мар.

Авиаци министерстви çапла пĕлтерет: ĕнер каç пулса çитиччен çыранри оборона самолечĕсен пысăк мар соединенийĕ противникăн Брест докĕнчи суднисем çине тата пĕр аэродром çине пырса тапăннă. Противникăн пĕр истребительне персе антарнă. Англин пур самолечĕсем те каялла тавăрăннă.

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 6-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: ыран январĕн 6-мĕш тенĕ чух çĕрле Германи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Лондон çине вут чĕртсе яракан бомбăсем пырса пăрахнă. Çĕртер выраннă пушарсем тухнă. Пушарсене сŷтернĕ çĕре халăх хутшăнса ĕçленипе вĕсене часах сŷтернĕ.

Албанири вăрçă ĕçĕсем

АФИНЫ, январĕн 5-мĕш. (ТАСС). Греци командованийĕ çапла пĕлтерет: пысăк мар çапăçусем вăхăтĕнче Греци войскисем 204 итальянеца тыткăна илнĕ. Çавăн пекех автоматлă хĕçпăталсем, боеприпассем нумай туртса илнĕ.

Англин Греции сывлăш-çар вăйĕсен командованийĕ пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 2-мĕшĕнче Англи авиацийĕ Эльбасан çине бомбăсем пырса пăрахнă. Виçĕ тĕлте пысăк пушар тухнă. Темиçе çурта сиен кŷнĕ.

Греции пур хаçатсем те çапла пĕлтереççĕ: фронтăн тинĕс патĕнчи секторне Çурçĕр Албанирен противникăн çĕнĕ вăйĕсем пырса çитнĕ, контрнаступлени пуçлама хăтланнă, анчах та вĕсене пысăк çухатусем кŷрсе, хăйсен малтанхи позицийĕсем çине хăваласа янă. Çапăçу хирĕнче итальянецсем нумай вăрçă материалĕсем пăрахса хаварнă. Пысăк мар операцисенче противникăн механизированнăй пысăк чăсремпе танксен чăсĕсем çапăçăва кĕнĕ. Анчах Греци войскисем хĕснипе итальянецсен хăйсен позицийĕсене хŷтлеме тытăнмалла пулса тăнă. Греци авиацийĕ противникăн механизированнăй колонниисем çине бомбăсем пырса пăрахнă, вара противник пăрахса тарнă.

Клисура районĕнче противник, пирĕн войскăсене малалла кайма чăрмантарас тесе, темиçе тĕлте контратака тунă, анчах унта та вĕсене каялла хăваласа янă.

Тепелене районĕнче итальянецсен паха позицийĕсене туртса илнĕ.

Çурçĕр фронтĕнче итальянецсем уйрăмăнах çине тăрса кĕрешеççĕ. Унта Греци артиллерийĕ противник батарейисен пĕр пайне стройран кăларнă. Греци артиллерийĕ ăнăçлăн персе тăнă хыççăн, противникăн боеприпассем выртакан складне аркатса тăкнă.

ПЬЮ-ЙОРК, январĕн 5-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Афины хулинче çапла пĕлтернĕ: Греции «Катсонис» ятлă подводнăй лодки Итали танкерне путарнă.

АФИНЫ, январĕн 6-мĕш. (ТАСС). Ĕнер каçхине Греци çарĕн командованийĕ çапла пĕлтернĕ: «пирĕн войскăсем пысăк мар операцисем туса ирттернĕ. 200 итальянеца тыткăна илнĕ тата вăрçă материалĕсем нумай туртса илнĕ».

Англин Греции сывлăш-çар вăйĕсен командованийĕ çапла пĕлтерет: ĕнер Англи авиацийĕ Эльбасан районĕнчи çар объекчĕсем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Нумай тĕлте пушарсем тухнă. Эльбасан хулинче питех те пысăк пушар пуçланнă. Англин пур самолечĕсем те хăйсен базисене тавăрăннă.

«Киноней» хаçат çапла çырать: «Çурçĕр секторĕнче противник чылаях пысăк вăйсем пухнă, анлă фронтра прорыв тума хăтланса, наступлени пуçлама пикеннĕ. Анчах та вăл наступлението чарса лартнă. Фронтăн центральнăй участокĕнче те противник пуçланă наступлението сирсе янă. Итальянецсене сухатусем кŷнĕ».

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 6-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Валона секторĕнче итальянецсен контратакисене сирсе янă. Противник пысăк сухату кŷнĕ. Çак участокра Итали войскисем кашни икĕ талăкра пĕр хут çĕнĕ вăйсемпе улшăнаççĕ, Валона хулине хăйсен аллине вĕсертес мар тесе, пĕтĕм вăйне курса тăрăшаççĕ.

Керавица тăвĕсен хĕвелтухăç сĕвекĕсем çинче те итальянецсен атакисене сирсе янă. Итальянецсем Валона патне каякан çул тăрăх Дукати пателле чакса пыраççĕ, вĕсене грексем хăваласа пыраççĕ. Дукати юханшывĕ урлă каçмалли кĕпере çĕмĕрсе тăкнă чухне 150 итальянец пĕтнĕ. Керавица тăвĕсем çинчи çапăçура 500 итальянеца тыткăна илнĕ, 4 оруди тата 12 пулемет туртса илнĕ. Тепелене секторĕнче Греци войскисем Фратар пункт не туртса илнĕ, хĕвеланăç еннелле 5 миля малалла кайнă, Кута ялĕ патне çитнĕ. Грексем çавăн пекех Скрапари тăвĕсем патнелле сывхарса пыраççĕ, Клисурăран çурçĕр еннелле 17 миляра Кала ялне туртса илнĕ.

Осум юханшывăн секторĕнче Греци войскисем Островице тăвĕсем патне çитнĕ (Москополерен кăнтăр-хĕвеланăç еннелле 9 миляра).

Итальянецсем, Эльбасан патне çĕрсе тухас шутпа, 5 хут атака тунă, вĕсен атакине пула грексем Москополерен кăнтăр-хĕвелтухăç еннелле чакнă.

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Кăнтăр Китайри фронтсенче юлашки кунсенче нименле операцисем те пулман. Японецсен авиацийĕ кăна хăйĕн ĕçне тукалана, вăл Гонконгран хĕвеланăç енчи районра чылай хуласем çине тата Кантон—Ханькоу чугунçулĕ тăрăхĕнчи темиçе хула çине пырса бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнине халăх хушшинче çынсем вилнĕ тата аманнă. Январĕн 15-мĕшĕнче Японин самолечĕсем Куньмин (Юньнань провинцийĕ) çине бомбăсем пăрахнă. Мĕнле-сиенсем тунă çинчен тĕплĕн пĕлтерни çук.

Çакăн пек сведенисем пур: Кантон районĕнче Япони войскисем 50 пин çын таран шутланаççĕ.

Ытти фронтсенчи ĕçсем çинчен сведенисем çук.

Январĕн 6-мĕш. (ТАСС).

КĔСКЕН

▲ Мергуора (Бирмăн кăнтăр енче) пысăк пушар пулнă. Пурĕ 400 çурт пĕтнĕ. 4.000 çын нимĕнсĕр тăрса юлнă.

▲ Шанхай хĕрринче декабрĕн кĕртме унта Японин часне янă. 31-мĕшĕнче ванцзинвеевецсен войскисен икĕ отрячĕ хушшинче вăйлă çапăçу пулса иртнĕ. Отрядсене йĕркене тăвĕсем патнелле сывхарса пыраççĕ, Клисурăран çурçĕр еннелле 17 миляра Кала ялне туртса илнĕ.

Осум юханшывăн секторĕнче Греци войскисем Островице тăвĕсем патне çитнĕ (Москополерен кăнтăр-хĕвеланăç еннелле 9 миляра).

Итальянецсем, Эльбасан патне çĕрсе тухас шутпа, 5 хут атака тунă, вĕсен атакине пула грексем Москополерен кăнтăр-хĕвелтухăç еннелле чакнă.

Италин Бардири войскисем англичансене парăннă

ЛОНДОН, январĕн 6-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: «Ĕнер Барди гарнизонĕ англичансене хирĕç кĕрешме чарăннă. Хула, ăна хŷтленĕ мĕнпур войскăсем, çар снаряженийĕн запасĕсем — йăлтах пирĕн алăра. Тытăна лекнисен хисепĕ 25 пин çынран та иртет. Тытăна лекнисем хушшинче — Италин Бардири войскисен главнокомандующийĕ генерал Бергонцоли тата тепĕр 4 генерал. 45 çăмăл танкпа 5 вăтам танка пĕтерсе тăкнă е пирĕн войскăсем туртса илнĕ».

Рейтер агентствин обозревателĕ Барди стратеги тĕлĕшĕнчен мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен çапла çырать: çак порт Соллум пекех лайăх мар пулсан та, Англин Ливири войскисене кирлĕ япаласем парса тăрас ĕçре чылаях пысăк вырăн йышăнать. Халиччен фронта кирлĕ япаласене автотранспортпа илсе пынă.

Барди районне противникран тасатса пĕтиччен, тет обозреватель, Италин тĕп вăйĕсем Тобрук районĕнче, Бардирен 70 миляра пулаççĕ. Çакă ĕнтĕ вĕсене контрнаступлени пуçлама йывăрлатать. Обозреватель шутланă тăрăх, Бардине англичансем туртса илнĕ хыççăн итальянецсен Египета хирĕçле операцисем тума урăх база çук.

Америка корреспонденчĕ Çурçĕр Африкăри çапăçусем çинчен

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 6-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ Каирран çапла пĕлтерет: унта илнĕ сведенисем тăрăх, Англин малти чаçĕсем Тобрука ситнĕ. Корреспондент тата çапла пĕлтерет: юлашки сведенисем тăрăх, Бардире англичансем итальянецсене 30 пин çын ытла тыткăна илнĕ.

Итали командованийĕн сводки

РИМ, январĕн 5-мĕш. (ТАСС). Итали командованийĕ çапла пĕлтерет: Барди фронтĕнче çапăçусем пыраççĕ. Итали авиацийĕ противник войскисем çине бомбăсем пыра-пыра пăрахать, пулеметсенчен перет. Италин çĕр çинчи войскисемпе сывлăшри вăйĕсем противнике хирĕç геройла çапăçнă пулсан та, противник опорлă темиçе пункта туртса илнĕ. Противникăн Барди çыранĕ патĕнче тăракан карапĕсем çине Итали авиацийĕ пĕр хут çеç мар бомбăсем пырса пăрахнă. Сывлăшри çапăçусем вăхăтĕнче Итали истребителĕсем противникăн 8 самолетне персе антарнă. Италин 3 самолечĕ хăйсен базисене тавăрăнман.

Хĕвелтухăç Африкăра Англи самолечĕсем Сомалири хăшпĕр пунктсем çине бомбăсемпе листовкăсем пырса пăрахнă. Англо-Египет Суданĕнче икĕ енĕ те пĕр-пĕрин çине артиллерирен переççĕ.

Германири информаци бюровĕ Франципе Германи хушшинчи отношенисем çинчен

БЕРЛИН, январĕн 5-мĕш. (ТАСС) Германири информаци бюровĕ çапла пĕлтерет: ютçĕршывсен чылай журналисчĕсем Германи ютçĕршыв ĕçĕсен министерствине Франципе Германи хушшинчи отношенисем пирки ыйтусем панă. Çакна май, тет агентство, Германири официальнăй çынсем хушшинче çапла пĕлтереççĕ: юлашки вăхăтра Франципе правительствăра тăракан çынсем хушшинче Франципе Германи хушшинчи отношенисем пирки дискусси пырать, Берлинра çак дискуссине пысăк интереспе сăнаса тăраççĕ. Германи ютçĕршыв ĕçĕсен министерствинче çакна палăртăвăççĕ: Францири пĕр палăртă клика Франципе Германи хушшинчи туслă ĕçсене хирĕç саботаж тума тăрăшать, Франципе Германи хушшинчи политикăлла отношенисем малашне мĕнле ataланса пырасси Виширн дискусси результачĕсенчен килет.

США-ри хĕçпăшаллă вăйсен хисепĕ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 5-мĕш. (ТАСС) Ассошиэйтед пресс агентстви Вашингтонран çапла пĕлтерет: Америка çар ĕçĕсен министерствин даннăйĕсем тăрăх, хальхи вăхăтра Америкăри регулярлă çарпа нацjanлĕ гвардире 608 пин çын шутланать, пĕлтĕрхи январь уйăхĕнче — нацjanлĕ гвардине мобилизацилеччен — 250 пин çын пулнă. Америка тинĕс флочĕн тата тинĕс пехотин личнăй составăн хисепĕ часах 250 пин çынна çитет.

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 5-мĕш. (ТАСС) Юнайтед пресс агентствин Вашингтонран çапла пĕлтерет: официальнăй сведенисем тăрăх, 1940 çулта США-ра çĕнĕрен 205 аэродром тата гидросамолетсем валли базăсем тунă. Хальхи вăхăтра США-ра 2.656 аэродром шутланать.

ЮТÇĔРШЫВСЕНЧЕ

▲ Словенире пур пекарнясенче те çăкăра 40 процент тулă çăнăхĕнчен тата 60 процент кукуруза çăнăхĕнчен пĕçереççĕ.

▲ Франципе государствăн 1941 çулти пĕрремĕш чĕрĕкри бюджетне тусе хатĕрленĕ, бюджет 40 миллиард франк шутланать. Оккупацине сыхăннă расходсене çав бюджета кĕртмен.

Аслă шкулсенчи экзамен сессийĕ

Аслă шкул ĕçĕсен комитетĕнчи канашлу

Январĕн 6-мĕшĕнче Аслă шкул ĕçĕсен СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Комитетĕнче канашлу туса ирттернĕ, канашлура аслă шкулсенчи хĕллехи экзамен сессийĕн малтанхи итогĕсене сŷтсе-явнă.

Канашлăва уçса, комитет председателĕ С. В. Кафтанов юлташ çапла кăтартса панă: хăшпĕр аслă шкулсенчи профессорсемпе преподавательсен составĕ студентсен пĕлŷлĕхне тĕрĕс хак парасси пысăк ответлă ĕç пулнине ăнланса илмен. ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă решени начар ĕлкĕрсе пыракан студентсене лайăх вĕренеççĕ тесе хак панине сивлерĕ, çак решенирен кирлĕ выводсем туман-ха.

Канашлу Государствăн Мускаври Университечĕпе Мускаври хурçă институтĕнче экзаменсем мĕнле пынине çирĕппĕн контроллесе тăма, студентсен пĕлŷлĕхне тĕрĕс хак парассине пурнăçа кĕртме чĕнĕ. (ТАСС).

1941 çулти спорт календарĕ

Физкультурăпа спорт ĕçĕсен Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи комитечĕ 1941 çулти спорт календарьне туса çирĕплетнĕ. Çав календарьте пăхса хунă тăрăх, кăçал физкультура енĕпе хĕлле те, çавăн пекех çуллахи вăхăтра та массăллă ăмăртусем нумай пулса иртмелле.

Январь — февраль уйăхĕсенче йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕсем, Хĕрлĕ Çар 23 çул тултарнă ятпа физкультурăпа оборона праçникĕ пулмалла. Çавăн пекех, республикăри палăлă физкультурниксем автономлă 9 республикăн хĕллехи спартакиадине хутшăнаççĕ.

Май уйăхĕнче çуллахи спорт сезонĕ пуçланнă ятпа физкультурниксен пысăк праçникĕ пулмалла. Вăл кун массăллă ăмăртусем пулаççĕ.

Июнь уйăхĕнче Чăваш АССР 21 çул тултарнă ятпа физкультурниксен парачĕ тата çуллахи спартакиадăçă институтĕнчи факультетсенчен пĕринче 5-мĕш курсра вĕренекен студентсем 70 процент ытла «отлично», 23 процент «хорошо» хак илнĕ. Тепĕр факультетри студентсем «отлично» тата «хорошо» илнĕ. Мускаври университетра та ĕçсем çакнашкалах. Кунта пĕр курсри 54 студентран пурте пекех «отлично» хак илнĕ.

МГУ ректорĕ Бутягин юлташ тата хурçă институчĕн директорĕ Мозговой юлташ çапла калана: преподавательсем экзамен тытакан студентсене час-часах тивĕçсĕр çăмăл ыйтусем параççĕ, студентсен пĕлŷлĕхĕсене тивĕçлĕ мар лайăх хак панисем тĕл пулаççĕ.

Кафтанов юлташ аслă шкулсен директорĕсене экзаменсем мĕнле панине çирĕппĕн контроллесе тăма, студентсен пĕлŷлĕхне тĕрĕс хак парассине пурнăçа кĕртме чĕнĕ. (ТАСС).

Хĕллехи каникулсем

Отличниксем искусство работникĕсемпе тĕл пулчĕç

Январĕн 6-мĕшĕнче, Чăвашсен Государство Академи Театрĕнче хулари шкулсенче вĕренекен отличниксем Чăваш АССР искусство работникĕсемпе тĕл пулчĕç. Унта учительсем те нумай пынă.

Вĕренŷ отличникĕсене искусство ĕçĕсен Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи управлени начальникĕ В. Ржанов, РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ Б. Алексеев, искусствăн тава тивĕçлĕ деятелĕсем: композитор Иванишин, художник М. С. Спиридонов тата Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕ Праудин юлташсем саламларĕç.

РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ Б. Алексеев юлташ хăй мĕнле майпа артист пулни çинчен тата «Как закалялась сталь» пьесăра Павел Корчагин рольне мĕнле хатĕрленсе выляни çинчен каласа панă. Вăл пирĕн çĕршывра кăна çамрăк ачасем хăйсен ăмĕтне пурнăçлама пултарнине, партипе правительство тата пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен çулпуçĕ, çамрăксен юратăвĕ тусĕ тăван Сталин юлташ тăрăшни çинчен каларĕ.

— Шкулсенче вĕренекен ачасем хушшинче çамрăклах художество ĕçне оратакансем нумай. Вĕсем пĕчĕкренех художник пуласшăн ĕмĕтленеççĕ. Анларнă, çĕлĕксемпе. Алăка уçсан вĕсене тŷрех сивĕ пырса çапать.

Ку секретариат малтан халĕ халăх судьи Афанасьев пурăнакан пŷлĕмре пулнă, ăна унтан тăпăлтарса кăларса янă. Раз начальство хушать! Куntах суда пынă свидетельсене кĕтсе лармалли вырăн: хăть тăр, хăть хирек мĕн тупса лар. Ку свидетельсене тепĕр чухне иртен пусласа кăçхен тенĕ пек ура çинче тăмалла килсе тухать.

— Ку халăх судьи çинчен сăмах тапратас çукчĕ, вăл пиррe усал тунă çын мар,—теççĕ унта ĕçлекен çынсем.—Вăл темĕншĕн хăйĕн интересне общество интересĕнчен çŷле хурать.

Ку «интерес» çакăнта пулать: вăл халăх судĕ вырнаçнă чипер вырăна хваттер туса хунă. Вутти-шанки хăйĕн мар, ăна халăх судĕн укçипе илнĕ, ăна вăл çунтарать. Халăх судĕн ытти япалисене тăтăшах тытать. Çак-сенчен хăшне пĕрне шута илсе, унта ĕçлекенсем Афанасьев çинчен тата çапла каласа панă:

— Вăл хăйĕн служба положенийĕпе вăйлăн усă курать,—теççĕ.

ИВ. МОСЕЕВ.

Служăбăра чухне

Тулашĕнчен сарăпа сăрланă ку çурта. Вăл çурт çумĕнче çине-çинех тенĕ пек вывескăсем: прокурор, халăх следователĕ, пĕрремĕш участокри халăх судĕ, Осоавиахимăн районри Совечĕ, районри «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕ тата...

Тата ку çуртра Калининский районри пĕрремĕш участокри халăх судьи Петр Алексеевич Афанасьев хăйĕн семьине пурăнать. Унăн кунта пурăнни çинчен пĕлтерекен нимĕнле вывеска та çук. Апла пулсан та прокурорпа халăх следователĕ патне, суда, Осоавиахим Райсоветне тата редакцине пынă çынсемшĕн вăл палăлă: суд пырать, допрос тăваççĕ,—ачасем шавлани, юрлани илтĕнет; редакцине заметкăсем пама пыраççĕ, çынсем вăл заметкăсем тăрăх консультаци илеççĕ,—ачасем юрлани халхаран каймасть; Осоавиахим Райсоветĕнче пăшалтан пеме вĕренесси çинчен тата оборона ыйтăвĕсем тăрăх калаçаççĕ,—каллех шав. Итлеме те кансĕрлет, ĕçлеме те чăмантарать.

Алăк патĕнче, редакцине тата Осоавиахим Райсоветне кĕнĕ çĕрте, халăх судĕн секретариачĕ вырнаçнă. Секретариатра ĕçлекенсем тумтирсем тăхăнса ларнă, çĕлĕксемпе. Алăка уçсан вĕсене тŷрех сивĕ пырса çапать.

Ку секретариат малтан халĕ халăх судьи Афанасьев пурăнакан пŷлĕмре пулнă, ăна унтан тăпăлтарса кăларса янă. Раз начальство хушать! Куntах суда пынă свидетельсене кĕтсе лармалли вырăн: хăть тăр, хăть хирек мĕн тупса лар. Ку свидетельсене тепĕр чухне иртен пусласа кăçхен тенĕ пек ура çинче тăмалла килсе тухать.

— Ку халăх судьи çинчен сăмах тапратас çукчĕ, вăл пиррe усал тунă çын мар,—теççĕ унта ĕçлекенсем Афанасьев çинчен тата çапла каласа панă:

— Вăл хăйĕн служба положенийĕпе вăйлăн усă курать,—теççĕ.

ИВ. МОСЕЕВ.

Колхоз театрĕсем 1941 çулта

Колхоз театрĕсем 1941 çулта нумай постановкăсем лартса пама палăртнă. Çавăн пекех хăйсен репертуарне те çĕнетсе пыраççĕ. Сĕнтĕрвăрринчи колхоз театрĕ Тихăн Петĕркки «Тапрачу», Кăлганăн «Алим», чăвашла куларнисенчен: «Сады цветут», «Воспитанница» тата «Шторм» пьесăсене лартса парать.

Комсомольскри колхоз театрĕ кăçалхи сезонра Беловăн «Пурнăç пуçламĕшĕ», Назаровăн «Татьяна», Шаповаленкăн «Альбина Мегурская», Виртан «Земля» пьесисене лартать.

Етĕрнери колхоз театрĕ К. В. Ивановăн «Нарспи» поэми тăрăх сырнă пьесăна, Гогольăн «Женитьба», Ялавинăн «Ывăлĕ», Трофимовăн «Радость», Харьковăн «Пионерская застава», Аверьяновăн «Благополучно» пьесăсене лартма хатĕрленет.

Шупашкар хула Совечĕн депутачĕсене пĕлсе тăма

Ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн Исполкомĕ хула Совечĕн VIII-мĕш сессине 1941 çулти январĕн 10-мĕшĕнче, каçхине 7 сехетре, Колхозник çуртĕнче пухма йышăннă.

КУН ЙĔРКИ

1. Шупашкар хулинче сывлăха сыхлас ĕç мĕнле тăнă çинчен.
2. 1941 çулта хула валли вут-шанкă тăратасси çинчен.

Хула Совечĕн Исполкомĕ.

СУД

Пекарьсен ултавлă ĕçĕсем

ШАХАСАН. Матьшури сельпора ĕçлекен М. Петровна Д. Семенов пекарьсем çăкăр пĕçерме панă çăнăхсене чылайранпа вăрласа пурăннă. Çăнăхсене вăрланă пирки çăкăр пĕçермелли нормăна тултарса пыман. 96 процентлă тулă çăнăхĕнчен 4 процент, 85 процентлă тулă çăнăхĕнчен 2 процент, ыраш çăнăхĕнчен 3 процент нормăран чакарса çăкăр пĕçерсе пынă.

Çăнăх вăрланине шыраса тупас сăлтавпа çăкăра сăнаса тăрса пĕçерттернĕ, мĕн чухлĕ çăкăр тухнине те виçсе пăхса тĕрĕслене пулнă. Çак вăхăтра Петров пекарь улталамa пăхнă, çăнăхран çăкăр сахал тухмалла тăвас тесе 3 килограмм çăкăр чустине кăмака хыçне пытарнă.

Асăннă пекарьсен килĕсене кайса пăхнă хыççăн, Петров патĕнче 990 тенкĕлĕх, Семенов патĕнче 912 тенкĕлĕх çăнăх тупнă, çав çăнăха вĕсем пекарняран вăрласа пынă пулнă.

Шăхасан районĕнчи 2-мĕш участокри Халăх судĕ çак ĕçе пăхса тухнă. Государство пурăлăхне çаратнăшăн суд Петровна Семенова икшер çуллăха тĕрмене хупмалла, çăнăх хакне шыраса илмелле тунă.

П. Микушкин.

Йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвне хатĕрленеççĕ

ÇЕРПУ. Ялхуçалăх техникумĕнчи комсомолецсем Хĕрлĕ Çар 23 çул тултарнă ятпа пулса иртекен йĕлтĕрçĕсен ăмăртуне хатĕрленме тытăнчĕç. Ăмăртуна хутшăнакансен сывлăхне медицина енĕпе тĕрĕсленĕ. Çакăн хыççăн 41 çын йĕлтĕрпе çŷреме юрăхли палăрчĕ.

Техникумра 8 команда организацленĕ. Командăсене чи лайăх йĕлтĕрçĕсем ертсе пыраççĕ.

Физкультура коллективĕ çумĕнчи секцисем ертсе пынипе тренировкăсем пулаççĕ. Малтанлăха 3—7 километра кайса килнĕ.

Çак кунсенче техникумра ăмăртăва мĕнле хатĕрленсе çитнине тĕрĕслеме палăртнă.

Комсомолецсем ăмăртура малти вырăна тухассишĕн кĕрешеççĕ.

И. Васильев.

Çĕнĕрен 15 çынна МОПР членне илнĕ

Шупашкар хулинчи МОПР организацисен отчетпа суйлав кампанине хатĕрленнĕ май Чăвашгосиздатри МОПР ячейки член билечĕсене уламтарса пĕтерчĕ. 1940 çулăн член укçисене те пухса çитернĕ. Çĕнĕрен 15 çынна МОПР членне илнĕ.

Н. Т.

ХАÇАТСЕНЧЕН

Шыв айĕнчи шофер

Пĕр ирхине Ленинграда çакăн пек ĕç пулса иртнĕ. Çуталас умĕн урампа пĕр автомашина иртсе пынă. Вăл питĕ хăвăрт кайнă, унăн шоферĕ ŷсĕр пулнă. Çав ŷсĕр шофер тытса пыракан машина кĕпер çине пырса çапăннă та Нева шывне сикнĕ.

Шыв хĕрне чупса пынă çынсем шофера çăлса кăларнă. Часах водолазсен катерĕ пырса çитнĕ. Водолаз Иван Зиновьев тумланнă та шыв тĕпне аннă. Вăл шыв тĕпĕнче 6 метрта ларакан автомашинăна курнă, машина сиенленмен пулнă.

Мĕн тумалла, йăтса кăларма çывăхра кран пулман. Зиновьев машина лебедкăпа туртса кăларма шухăшланă. Çавăн пек тунă та вăл. Анчах темле туртсан та, машина хускалман.

Иван Зиновьев кабинкăна кĕрсе ларнă та машинăна хута янă. Машина тапранса малалла шунă. Водолаз руле тытса пынă. Лебедка часах машина шыв айĕнчен туртса кăларнă.

Çапла вара водолаз Зиновьев тĕнчере чи пирвай типĕ сĕрте çŷрекен грузовой машинăпа шыв айĕнче çŷресе курнă («Курортная газета»).

С. Разин вăхăтĕнчи тупă

Гурьеври ачасен больницинче ĕçлекен рабочи шăтăк чавнă чухне çĕр айĕнче чугунран шăратса тунă икĕ тупă тупнă. Вăл тупăсене Степан Разин çав вырăнта пулнă вăхăтра хăварнă тесе шутлаççĕ.

Тупăсене вырăнти музей панă («Казахстанская Правда»).

Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиум Председателĕн Приемнăйĕн ĕç вăхăчĕ çинчен

Ĕçпе пыракансене йышăнассине лайăхлатас тесе, 1941 çулти январĕн 4-мĕшĕнчен пуçласа Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиум Председателĕн Приемнăйне кашни кунах, кăнмалли кунсемпе праçник кунĕсемсĕр пуçне, ирхине 10 сехетрен пуçласа кăçхине 6 сехет те 30 минутчен ĕçлемелле тунă.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн ĕçĕсен Управляющийĕ Р. АЛЕКСЕЕВ.

Парткабинет пĕлтерни

ВКП(б) Шупашкар горкомĕн парткабинетĕнче «Вырăссен аслă поэчĕн Некрасовăн творчести çинчен» темăпа пулмалли лекцие январĕн 8-мĕшĕнчен урăх куна куçарнă. Лекци хăçан пуласси çинчен уйрăмăн пĕлтеретпĕр.

Парткабинет.

Ответлă редактор Р. О. МАЛЮТИН.

Редакци адресĕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати. Телефонсем: редакторăн—0—67, редактор заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн—0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн —2—30, «Капкăн» тата «Ĕçхĕрарăмĕ» журналсен—6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн—0—85, издательство заведующийĕн—5—38, конторăн—0—23.

НТ 2230

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии Чувашской АССР. Заказ № 2. Ф. Б. 9×84 п. л